Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 НОЙАБĔР 26 ШАМАТКУН 271 (5084) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, ял хуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленноç пайĕн—0—85, ял корсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн 6—23.

Перекет кассисен ĕçне вăйлатмала

Пирĕн çĕршывра халăх доходĕ çулран çул ӳссе пырать. 1937 çул тĕлне халăх доходĕ вăрçă умĕнхипе танлаштарсан пилĕк хут ытла ӳсрĕ. Çак çул тĕлĕнех Совет Союзĕнчи рабочисем ĕçлесе илекен укçа-тенкĕ хисепĕ 10,5 миллиард тенкĕлĕх хăпарчĕ. Колхозсен тупăшĕ те ӳссе пырать.

Ĕççыннисен пурнăçĕ лайăхланса пынине кăтартакан палла тĕслĕхсенчен пĕри вăл—перекет кассине укçа-тенкĕ хывасси нумайланса пыни. Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче Чăваш республикинче перекет кассисене укçа-тенкĕ перекетлеме хывни вунă хут ытла ӳсрĕ. Кăçал пирĕн республикăра 10 уйăх хушшинче перекет кассисенчи вклад пĕлтĕрхи хисепрен мĕлйун тенке йахăн ӳсрĕ. Шупашкар хулинчи рабочисемпе служащисем хушшинче 100 çынтан 90 çын хăйсен укçине перекет кассинче тытаççĕ. Вкладчиксен шучĕ хуласенче çеç мар, ялсенче те хытă йышланать.

Рабочисен, хресченсен, совет интеллигенцийĕн пурнăçĕ лайăхланса пыни, стахановла ĕçлесе ĕç укçи нумай илни, колхозниксем вăйлă тыррпул туса илни—перекет кассисен вкладчĕсене куллен ӳсе пыма май параççĕ. Совет гражданĕсем хăйсен ытлашши укçи-тенкине перекет кассине хурса, пĕр йенчен—совет государствине пулăшаççĕ, тепĕр йенчен—укçа хуçишĕн процент тăрăх хăйсене валли тупăш илеççĕ.

Совет çынни хăйĕн укçи-тенкине шанчăклă çĕре—перекет кассине хурать. Перекет кассисем—халăх хуçалăхне валли халăх укçа-тенкине мобилизацилекен паллă майсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Ĕççыннисен пуянлăхне ӳстерес тата культурăлла пурнăçĕ перекет кассисенче тăракансен хисепне вĕçĕмсĕр ӳстерсе пыма май парать.

Анчах çак йенчен илсе пăхсан, пирĕн перекет кассисем нумайĕшĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Перекет касси-работникĕсен чылайăшĕ бюрократла, чиновникле ĕçлеççĕ, ĕç çине çиелтен пăхаççĕ, перекет касси усăллăхĕ çинчен халăха ăнлантарса памаççĕ, вкладчиксемпе тивĕçлĕ ĕçлемеççĕ.

Финанс органĕсенче ларакан халăх тăшманĕсем перекет кассисен ĕçĕнче сахал мар сийен куне. Вĕсем перекет кассисен ĕçне пăсса лартарса пынă, çавăн урлă вкладчиксен хисепне чакарма тăрăшнă. Чылай çĕрте перекет кассисене хупса пĕтернĕ.

Сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси çителĕксĕр пырать-ха. Халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес майпа кăçал çĕнĕрен 35 перекет касси уçнă. Анчах вĕсенчен хăшпĕрисем халĕ те ĕçе тытăнман. Çĕрпӳ районĕнче Енĕшкассинче май уйăхĕнчех перекет касси уçнă,—вăл пайан кун та ĕçе пуçăнман. Шурчари (Ишлей р.), Турханкассинчи (Сĕнтĕрвăрри р.) çĕнĕ перекет кассисем те ĕçлеме тытăнман. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи перекет кассин заведующийĕ Самсонăв йулташ Пантăкри перекет касси ĕçне йулашки вăхăтченех йĕркелесе йарайман пулнă. Патăрйел районĕнчи перекет кассин заведующийĕ Николайĕв йулташ халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес пирки сăмахпа пĕрмай калаçать, çав вăхăтрах перекет кассинчи укçа-тенкĕ хисепне ӳстерес пирки, перекет касси ĕçне тивĕçлĕн йĕркелесе йарас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Çавăнпа кунта ĕç анса пырас выранне, чакса пырать.

Чылай перекет кассисенче культурлăх çук. Перекет кассисен пӳлĕмĕсем илемсĕр, таса мар. Пыракан çынсене ларса канма йе çырма сĕтел-пукан, тавралăхсем çителĕксĕр. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек перекет кассисенче вкладсен ӳсĕмĕ кирлĕ пек пулма пултараймасть.

Пирĕн перекет кассисем вкладсем ӳстерес тĕлĕшпе çеç мар, заем укçи пухас йенĕпе те начар ĕçлеççĕ. Правительствăн „Виççĕмĕш пилĕкçуллăх заемне" малашне сарма чарасси çинчен постановлени кăларнă хыççăн, перекет кассинче ĕçлекенсем чылайĕшĕ: „Халĕ ĕнтĕ пирĕн ĕç пĕтрĕ",—тесе шутланă. Çавна пула ĕнтĕ рабочисемпе служащисем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна ĕçлеме куçсан тепĕр чухне малтан заем çыранине тепĕр хут çĕнетеймесĕр тăраççĕ. Çак ĕçпе никам та интересленмест. Ку ĕç вăл—чи малтан перекет кассисен ĕçĕ пулмалла. Нумай районсенче колхозниксем хушшинче заем укçине начар пухаççĕ. Республикăра 363 колхозра заем укçи пухма пачах та тытăнман. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек тĕслĕхсем вĕсем районри перекет кассисемпе финанс пайĕсем ĕçлемен çĕрте пулаççĕ.

Пуçарулăх пур çĕрте, çынсем тăрăшса ĕçленĕ çĕрте пачах урăхла кăтартусем. Уравăшри перекет кассине (Пăрачкав р.) кăçал нарăс уйăхĕнче уçнă. Кунта халĕх ĕнтĕ перекет кассинĕ хунă укçа-тенкĕ хисепĕ вуншар пин тенкĕпе шутланать. Перекет касси тăватă уйăхĕн кварталăн планне октябрь уйăхĕнчех 130 процент тултарчĕ. Контролер Орлов Платон Иванович перекет касси аталанăхĕшĕн хытă тăрăшать. Вăл колхозниксем патне кил-йĕрен çӳресе перекет кассин усăллăхĕ çинчен ăнлантарса парать, колхозниксен нухăвĕсенче тухса калать.

Перекет кассисен ĕçне çĕнетесси тата çирĕплетесси кадрсенчен нумай килет. Финанс бань ĕçĕсенче халăх вăхăтра ĕçлекен çынсем нумайĕшĕ халăх хушшинчен тухнă, ĕçе çĕнĕрен лартнă, ĕçлеме пултаракан çынсем. Вăл пирĕн совет интеллигенцийĕ. Вĕсемпе лайăх ĕçлени, кадрсене политикăлла воспитани парас ĕçе вăйлатни кирлĕ. Финанс кадрĕсене большевиксăла вĕрентме пулăшасси—партипе совет организацисен ответлă ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Çĕнĕ çул çитесси уйăх ытларах çеç йулчĕ. Тăватăмĕш квартал финанс планне тултарассишĕн пĕтĕм вăйпа хурса ĕçлес пулать. Плана тултарас ĕçри тĕп мехлет—социалисăмлă ăмăрту, массăла ăнлантару ĕçне анлăн сарни пулмалла.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Ленинградри артиллери-техника училищине „Хĕрлĕ Йалав" орденĕпе наградăласси çинчен

Ленинградри артиллери-техника училищи çирĕм çул тултарнине паллă тăвас шутпа, граждан вăрçи çулĕсенче тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн тата артиллери-техника кадрĕсем хатĕрлес ĕçре тунĕ çитĕнӳсемшĕн Ленинградри артиллери-техника училищине „Хĕрлĕ Йалав" орденĕпе наградăлас.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулхи нойаберĕн 23-мĕш.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командлă составĕн квалификацине хăпартмали артиллери курсне „Хĕрлĕ Йалав" орденĕпе наградăласси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командлă составĕн квалификацине хăпартмали курсăн иртнĕ вăхăтри паттăр ĕçĕсене паллă тăвас шутпа тата Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн артиллери кадрĕсене хатĕрлес ĕçре тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунăшăн Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командлă составĕн квалификацине ӳстермели артиллери курсне „Хĕрлĕ Йалав" орденĕпе наградăлас.

ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн
Председателĕ М. КАЛИНИН.
ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн
Çекретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 çулхи нойаберĕн 23-мĕш.

Чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн

Иртнĕ пăвăл уйăхĕнче чукун çул Канаш станцине республикăн столицине—Шупашкара пĕрлештерчĕ. Сак 102 километр тăршшĕ çул республикăн, йысăк районĕ территорийĕ тăрăх тăсăлса выртать. Канаш—Шупашкар чукунçулĕ политика, хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен калаççи тăса кирлĕ мар. Ку пин—мĕтĕм ессыннисемшĕн, канаш рабочийĕн, ... колхозникĕн, ... интеллигенцийĕн паллă.

Анчах чукунçула халичченех ĕçе йаман-ха. Ку ĕнтĕ 89-мĕш, 73-мĕш тата 49-мĕш километрсем çинче çĕр ĕçĕсене халь те туса пĕтерменнипе килет. Кунсăр пуçне 29 километр тăршшĕ участăк çинче халь те çула балластировка туса пĕтермен-ха.

Сакăнта кăтарнă километрсем çинчи ĕçсем мĕнле сăлтавпа чарăнса тăраççĕ-ха? Сак сăлтавсене пăхăртас шутпа, нойаберĕн 15-мĕшĕнче чукунçул линийĕ çине ПСК(б)П обком комитечĕн çекретарĕ Волков йулташ пынă.

— Кайманни тукнă автодрезина хăвăртлăхне вăйлăн ӳстерет. Малта чаваш пĕтерне çĕрсен çинче, çынсем пысăк мар ушкăнĕ кураннă пулать. Ку вăл—89-мĕш километр, чукунçула вăхăтра ĕçе йама чăрмантăрса тăракан виçĕ участăкри пĕри. Ку участокăн тăршшĕ 850 метр. Сак участокăн çурра таса пайĕ çинче ĕçсене туса пĕтернĕ. 300 метр çеç йулнă. Анчах кунти ĕçсен хăвăртлăхĕсене илсе пăхсан, çак участка çинчи ĕçсене çывăх вăхăтрах туса пĕтерес тесе калама шăмăлла сăлтав та çук. Ĕç ака мĕнрен: кунта ĕçлекен çынсем çук. Ку участка çумне çирĕплетнĕ Канаш тата Шăхаçан районĕсем рабочисен вăрăх ямассĕ. Нойаберĕн 18-мĕшĕнче кунта пурĕ те 47 çын çеç ĕçленĕ, вĕсенчен 37-шĕ Канаш районĕнчен, 10-шĕ Шăхаçан районĕнчен. Паллах, çакăн чухлĕ рабочи кунти ĕçсене çывăх кунсенче туса пĕтерме пултараç çук. Анчах çакна пулни Канаш райкомĕн çекретарне Белоруссов йулташа пачах чухлĕ те пăшăрхантармасть пулас, вăл çак участокăна çынсем йарса пулăшас тĕлĕшпе нимĕнле конкретлă ĕç туни çинчен те калаймарĕ.

73-мĕш километр çинче ĕçсем кăшт лайăхрах. Ку участка çумне çирĕплетнĕ Шăхаçан тата Трак районĕсенчен нойаберĕн 18-мĕшĕнче 75 çын ĕçленĕ. Уна уйăхри тăват-пилĕк кун хушшинче ку участкăра Шăхаçан районĕнчен 19—81 çын ĕçленĕ, Трак районĕнчен 22—56 çын. Анчах партийĕн Обкомĕ нойаберĕн 20-мĕшĕнче телеграмма пана хыççăн тин вăл районсен руководителĕсем ĕç вăйĕ пухма тытăннă. Участокăна районсен руководителĕсем хăйсем те пынă, анчах, шел, кун пекки вăл пĕр сайра пулать. Ку ĕнтĕ çакăн çинчен калать: хăшпĕр районсен руководителĕсем чукунçул строительстви çине тимлĕн пăхмаççĕ, уншăн ответлăха туймаççĕ, хăйсем йенчен ĕшкен чухлĕ пуçарулăх та кăтартмаççĕ.

Сак çитес кунсенчех асăннă районсен руководителĕсем кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ парсан, 73-мĕш километрта ĕçсене çывăх кунсенчех туса пĕтерме пулать.

Уйрăмăнах 49-мĕш километрта çĕр чавас ĕç хăрушлăх умĕнче тăрать. Кунта виçĕ пин кубла метртан кайа мар çĕр чавса купаламалла. Çак участкăри ĕçсене пилĕк-улта кун хушшинче туса пĕтерме участкăра кулленех 400 çынтан кайа мар ĕçлемелле. Халлĕхи вăхăтра кунта ĕçлекенсем питех те сахал. Мĕншĕн тесен, çак участка çумне çирĕплетнĕ Çĕрпӳ тата Вармар районĕсем ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн телеграммине илнĕ хыççăн та ĕç вăйне организацилес тĕлĕшпе нимĕнле тăкăлă ĕçсем те туман.

— Пынăпах пулать, епĕр йулашки вăхăтра чукунçул ĕçĕнче ĕçлеме чарăнтамар,—тесе калать Çĕрпӳ райĕçтăвкăм председателĕ Антонăв йулташ.

— Мĕншĕн?

— Пирĕн пата ĕлĕк, — тет Антонăв йулташ,—пĕрмайах килсе çӳретчĕç. Вавилкин йулташ телефон тăрăх ыйтатчĕ,—халĕ çук. Çавăнпа епĕр те чукунçул ĕçне интересленме пăрахрамăр пулас...

49-мĕш километрти ĕçсемпе тĕплĕн паллашнă хыççăн, Волкăв йулташ Антонăв йулташа ĕç вăйĕ пухас тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлеме хушрĕ. Вармар районĕн Çĕрпӳ районне пулăшас пулать.

Чукунçула експлоатацине парасси кайа йулни ĕç вăйĕ çитменнинчен килни çинчен каласçĕ. Ку тĕрĕс. Фактсем те çавăн çинченех калаççĕ. Туса çитермен ĕçсене тума ĕç вăйĕ çителĕклĕ парас пулсан, мĕн тумалла-ха? Колхозниксене чукунçула хăвăртрах ĕçе кĕртни кирлĕрен те кирлĕ ĕç пулса тăни çинчен ăнлантарса, вĕсене строительствăна вĕçлесе ситерме, организацилес пулать.

Чукунçул строительствинче ĕçлекен рабочисене валли кирлĕ таварсене кӳрессипе начар туса пыни çинчен сигналсем нумай пулнă. Вăл сигналсене çуту-пау организацийĕсем шута илмеççĕ. Шăхаçан райпотребсоюзĕн 89-мĕш километрти ларĕкĕнче çинчка, сахăр, шур çăкăр, краççын та çук. Трак станцинчи ларĕкра та сахăр, çăкăр тата краççын çителĕклĕ пулмасть.

Пĕр Трак йалĕнчи столовăйĕ çеç лайăх ĕçлет. Унта тĕрлĕрен апат-çимĕçсем пур, вĕсен пахалăхĕ те начар мар, хакĕ те йӳнĕ.

Чукунçулăн ĕçе кĕртме линин çине хăйар сарас тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тумалла. Анчах хальхи вăхăтра хăйăр сарас ĕç пĕтĕм çул тăршшĕпех чарăнса тăрать. Комсомол Чăваш Обкомĕн строительствăна 1000 комсомольци мобилизацилеме пулнă—пурнăçа кĕртмен. Комсомолецсене хăйар сарма çĕрте ĕçлеме организацилессине ВЛКСМ райкомĕсем те пурнăçа кĕртмен.

Халĕхи вăхăтра тумалли чи ответлă ĕç вăл—89-мĕш, 73-мĕш тата 49-мĕш километрти ĕçсем. Çак участкăсенчи ĕçсене хăвăрт туса пĕтерессе—пайăн, ялăн [illegible]. Çĕр ĕçĕсене пурне те хăвăрт туса пĕтермеле.

Канаш—Шупашкар чукунçул строительстви мĕнле пынипе тĕплĕн паллашнă хыççăн, Волков йулташ партийĕн обласри организацийĕ руководствине пулнă халăх тăшманĕ Иванов чукунçула туса пĕтерсе експлоатацие кĕртессине аркатнине сăнласа кăтартусем панине палăртрĕ. Чукунçул строительствинче ĕçлеме чукунçул касакан районсенчи колхозниксемпе йенчи аталăнчиксене çеç хавхалантармалла тесе пана кăтарту сăтăрла кăтарту пулнă-çке.

— Çавăнпа чукунçул строительстви — тет Волкăв йулташ,—пĕтĕм республикăшăн политикăпа економика тĕлĕшпе пысăк вырăнта тăракан ĕç вырăнне йышăнмасть. Çакăнпа ĕнтĕ строительствăна кайа йулни, чукунçула кăçал октаберĕн 1-мĕшĕнче вăхăтлăх експлоатацие кĕртесси çинчен Союз правительстви йышăннă решенине тата Çулсен Халăх Комиссарĕ Кагановичăн йулташ панă приказ пурнăçа кĕмесĕр йулни сăлтавĕ.

Союз правительстви йышăннă решенине пурнăçа кĕртмесĕр хăваракан тепĕр сăлтав вăл—чукунçул строительствин управленийĕ тата унăн руководителĕсем вырăнсенче строительствăна большевикла йĕркелеймени, строительствăри рабочисене валли кирлĕ условисем туса паман пулни. Рабочисем нумайĕшне пăрахса уçнă. Управлени работникĕсем строительствăри рабочисене кирлĕ инструментсем çителĕклĕ параймаççĕ, строительствăна ĕçлеме пыракансене çийĕнчех ĕç вырăнĕсене кăтартса паман.

Фактсем строительство управленийĕ, унăн начальникĕ Навидкин йулташ йалан ĕçлекен кадрсем хатĕрлес йенĕпе начар ĕçлени çинчен калаççĕ. Вĕсем кашни строительство производствăра ĕçлекен кадрсене строительствăра ĕçсене çитĕнтерине аналасăн [illegible].

Çула експлоатацие йана хыççăн ăнсакан пахса тăрать—çак ыйту строительство руководителĕсене сахал интереслентерет пулас. Кĕске вăхăт хушшинчех çак чи кирлĕ ĕç çине—çул çинче ĕçлекен кадрсем хатĕрлесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Пулăшнинчен Волкăв йулташ уйрăм ĕçсене тума, уйрăмах 89-мĕш, 73-мĕш тата 49-мĕш километрсене çирĕплетнĕ районсенчи парти райкомĕсем çав тери ответлăха туйманнине палăртрĕ. Волкăв йулташ пани çинче пулнă чух, ПСК(б)П Обкомĕ çак районсенчи парти райком секретарĕсене нойаберĕн 18-мĕшĕнче строительствăра пулма хушнăччĕ. Анчах Шăхаçан тата Ишлей райкомĕсен секретарĕсем участкăсене пыман. Çака ĕнтĕ вĕсем чукунçул строительстви çине йурăхсăр пăхнине лайăх кăтартса парать.

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул линине пĕтĕмĕшпе туса пĕтерме тĕп йăварлăхсем кайа йулчĕç. Кунта епĕр кăтартнă çитменлĕхсем пысăк йăварлăхах пулса тăмаççĕ. Анчах, апла пулин те вĕсене сĕнтерме чылай вăй хумала, большевикла ĕçлемеле.

Чукунçула анăçлăн туса пĕтерсе чи çывăх кунсенче експлоатацие парасси республикăри парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсен, пĕтĕм ĕççыннисен чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

ДМ. АНДРЕЙЕВ.

Канашри учитель вăтам шкулти преподавательсем ПСК(б)П Тĕпкомĕн „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен йышăннă постановленине пухаççĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): А. А. Алешинă, А. Т. Мартынăвă, И. П. Йермошкинă, А. Е. Йемельйанăв, Е. Ф. Тимофейĕвă, Н. И. Орловă тата Е. М. Федăрăвă йулташсем.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Мускав парти активĕн пухăвĕ

Нойаберĕн 22—23-мĕшсенче Мускаври партактивăн пухăвĕ ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановленине сӳтсе-йавнă.

Актив пухăвĕнче икĕ пин çынна йахăн пулнă.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" йышăннă постановлени çинчен ПСК(б)П Мускав тата Мускав хули комитечĕн çекретарĕ Щербаков йулташ доклад туса панă.

Щербаков йулташ докладĕ тăрăх прениссенче 23 çын тухса каланă. Вĕсем хушшинче: Данилин („Гудок" хаçат редакторĕ), Йем. Ярославский, Адоратский (Маркс—Енгельс—Ленин институчĕ), Минц („Граждан вăрçи историйĕн" редакци). Митин („Под знаменем марксизма" журнал) йулташсем.

Тухса каланисем пурте „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" кăларни партире тата партире мар большевиксен кадрĕсене, уйрăмах совет интеллигенци кадрĕсене идейăлла-теорилле воспитани парас ĕçе тĕпрен хускалса йĕркелеме пысăк май панине палăртнă, пропаганда ĕçне йĕртсе пырассине лайăх организацилеме практикăлла сĕнӳсем панă.

Щербаков йулташ йулашки сăмах каланă хыççăн пуху резолюци йышăннă, вăл резолюцире ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн парти пропагандине йĕркелесси çинчен йышăннă постановленине пĕтĕмпех ырланă.

Пуху çав тери пысăк çĕкленӳпе Сталин йулташ патне салам йама йышăннă.

(ТАСС).

Хĕрарăмсем чукунçул транспорчĕн техникине вĕренсе алла илеççĕ

„Сталинла Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ хĕрарăмсен паровозсене тытса пырас техникăна вĕренсе алла илмеле тесе чĕннине чукунçул çинчи темиçе пин работницăсемпе чукунçул çинче ĕçлекенсен арăмĕсем кăмăлласа йышăннă. Пур чукунçулсем çинче те машинист помощникĕсен курсĕсене организацилене, вăл курсене пĕтĕмпех хĕрарăмсене паллаçтарнă. Çавнашкал курсĕсенче мĕнпурĕ 3.680 çын вĕренет.

Çавăн пекех хĕрарăмсене валли ытти специальноçсем йенĕпе те курссем организацилене: станцисенчи дежурнăйсем, вакунсене пăхакансем, пуйăсем çинчи електромонтерсем, çул бригадирĕсем т. ыт. ыйтала вĕренмелли курссенче пурĕ 3.825 çын вĕренет.

Нумай пулмасть Ворошилăв йачĕпе тăракан чукунçулĕн Кавказри узелĕнче тавара пуйăсăн пĕтĕмпех хĕрарăмсенчен тăракан пĕрремĕш бригадине тунă, вăл бригадăна „Почетному железнодорожнику" значокпа наградăланă Анна Бондаренко йертсе пырать. Бригада икĕ хутчен çул çине кайса килнĕ те ĕнтĕ.

(ТАСС).

1.800 изобретени

ССРС Апат-çимĕç промышленноçăн Халăх Комиссариачĕн изобретенисен бюровĕ кашни кун апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисенчен, инженерсенчен тата техниксенчен хаклă сĕнӳсем илсе тăрать. Çак йулашки икĕ çул хушшинче кăна çавăн пек изобретенисене 1.800 тата темиçе пин рационализаторлă сĕнӳсене шута илнĕ.

Çитес вăхăтрах сахăр промышленноçĕнче Мандрико инженер сĕннĕ аппарата сăнаса пăхаççĕ. Вăл аппарат сахăр кăшманĕн сĕтекне кăларать. Мандрико сĕннĕ аппарат темиçе мĕлйун тенкĕ перекетлет.

Изобретательсене преми шучĕпе укçа нумай параççĕ. Кон. Сойфер тата Йакубов йулташсем преми шучĕпе 100 пин тенкĕ укçа илеççĕ. Вĕсем панă сĕнӳ кăçал спирт промышленноçĕнче 10 мĕлйун тенкĕ перекет парать.

Кăçал апат-çимĕç промышленноçĕнче мĕнпурĕ 150 изобретение пурнăçа кĕртеççĕ, çав изобретенисем паракан перекетĕн хисепĕ вуншар мĕлйун тенкĕ шутланать.

(ТАСС).

Рак чирне хирĕçле пĕтĕм тĕнчери ерне

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче рак чирне хирĕçле пĕтĕм тĕнчери ерне пуçланнă. Рак чирне хирĕçле ернене палла туса, нойаберĕн 24-мĕшĕнче Мускавра столицăри медицинă обществĕннăçĕн чаплă пухăвĕ пулса иртнĕ.

Пуху президиумĕнче—паллă учонăйсем, наукăн тава тивĕçлĕ деятелĕсем, профессăрсем, академиксем.

Пуху „ССР Союзĕнчи сывлăха сыхлав ĕçĕ тата рак чирне хирĕç кĕрешес ĕç" çинчен ССРС Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн заместителĕн Гращенкăв профессăрăн докладне итленĕ.

Академик Иоффе радий тата рентген çути наукăпа практикăшăн мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен доклад туса панă. Унăн докладне пысăк интереспе итленĕ.

Пуху Сталин тата Молотăв йулташсем патне салам йама йышăннă.

(ТАСС).

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ

АМСТЕРДАМ. Нойаберĕн 24-мĕшĕнче Гаагăра пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕн 12-мĕш турĕ пулса иртнĕ. Ейве Ботвинникрен выльаса илнĕ. Кереспа Альохин, Капабланкăпа Решевский выльаса пĕтереймен. Кересăн ĕçĕсем аванрах. Флорпа Файн пĕрне пĕри çĕнтереймен.

(ТАСС).

Малта пыракан стрелочниксем

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçулăн Трак разъезĕнче стрелочниксем кашнийĕх пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен умне рельсăсемпе шпал хушшисене таса тытса тăрас, пуйăссене вăхăтра çӳретес задачăна лартнă.

Ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслесе тухнă хыççăн стрелочниксем хăйсем çине илнĕ обйазательствăна анăçлăн пурнăçа кĕртсе пыни паларчĕ. Уйрăмах ĕçре Барсăв, Заубанăвă, Зиновйевă, Петров стрелочниксем малта пыраççĕ. Вĕсем кашни кунах плана 125—147 процент тултарса пыраççĕ. Петров, Степанăв, Григорйĕв, Иванов йулташсем те ĕç нормисене ытлашшипех тултараççĕ.

П. Йĕгорăв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парторганизацин ӳсӗмӗ

ПСК(б)П Тӗпкомӗ партине çӗнӗрен илесси çинчен йышăннă хайӗн постановленийӗнче партин пур организацисене те партине тӗрӗсленнӗ, политикă тӗлӗшӗнчен шанчăклă çынсене илмеле тесе, кăтартса панă.

Хатӗрлев Халăх Комиссариачӗн Йетӗрне районӗнчи уполномоченнайӗ çумӗнчи парторганизаци Тӗп Комитетăн çак постановленине чăннипех пурнăçа кӗртсе пыраť. Тӗпком постановленийӗ тухиччен парторганизацинче 3 член тата 2 кандидат пулнă. Парти Тӗпкомӗн постановленине пурнăçа кӗртсе, парторганизаци хайӗн ретне çӗнӗ çынсемпе ӳстерчӗ. Халӗ пуçламӗш парторганизацинче парти членӗсем 6, кандидатсем 5. Çаксене пурне те çӗнӗрен илнӗ.

Ӳсӗм ӗçре тӗрӗсленнӗ, общӗствăлă ӗçре хайсене кăтартнă комсомолӗцсен шучӗпе пулса пыраť. Комсомолӗцсенчен ПСК(б)П ретне 4 çын кӗчӗç, çав шутран хатӗрлев агенчӗсемпе инспекторсем 3 çын.

Çак çынсем производствăра мӗнле ӳссе пыраççӗ-ха? Колхозник пулнă, Хӗрлӗ Çартан 1936 çулта таврăннă Григорйӗв йулташ халӗ хатӗрлев агенчӗ пулса ӗçлет. Хатӗрлев Халăх Комиссариачӗн районри уполномоченнайӗн аппаратӗнче икӗ çул ӗçлесе хайӗн пултарулăхне кăтартрӗ. Кайа йулнă участка малти рете кăларнă. Вăл политикă тӗлӗшӗнчен те нумай ӳсрӗ. Парти кандидатне кӗнӗ хыççăн Григорйӗв йулташ хайӗн ӗçне тата нумай лайăхлатрӗ. Унăн участкинчи колхозсенчи таварлă фермăсем государствăна аш-какай, сӗт-çу тăратас çулталăк планӗсене 100 процент колхозниксемпе йединоличниксем 90 процент таран тултарнă. Хайӗн ӗçне лайăх туса пынине кура ăна парти райкомӗ Хатӗрлев Халăх Комиссариачӗн районти уполномоченнайӗн помошникӗн ӗçне тума лартрӗ.

Шойкин йулташ, йалсовет председателӗнче ӗçленӗ хыççăн, уполномоченнайӗн помошникӗ пулса ӗçлерӗ. 1938 çулта ăна парти членне илнӗ. Вăл хайӗн ӗçӗсене тăрăшса туса пыраť. Çавăнпа та ăна халӗ Хатӗрлев Халăх Комиссариачӗн районри уполномоченнайӗ туса хунă. Çтепанăв, Белобайӗв йулташсем те производствăра та, общӗствăлă ӗçре те лайăх ӗçлесе пыраççӗ. Белобайӗв йулташ хайӗн участкинчи колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче партилӗ-политикăлă ӗçе куллен туса пычӗ, партире тăман актив хушшинче вăйлăн ӗçлерӗ. Халӗ ăна ГОРПО председателне суйланă.

Парторганизацинчи коммуниссем пурте ПСК(б)П историйӗн Кĕске курсне тăрăшса вӗренеççӗ.

Анчах та парторганизацинче сочувствуйушчисем питӗ сахал. Çавăн пекех парторганизаци профсойуза çителӗксӗр йертсе пыраť. 1938 çул хушшинче кунта профсойуз членӗсен пӗрре те пуху пулса иртмен. Çавăн пекех çтена хаçачӗ те йӗркелӗ тухса тăмаť. Парторганизацин партин чăваш облаç организаци XIX-мӗш конференцийӗ профсойузсене йертсе пырассине вăйлатмала, тесе кăтартса хăварнине пурнăçа кӗртме тытăнман.

А. Чехонин.

Комитет çителӗксӗр ӗçленӗ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Нойабӗрӗн 18—19-мӗшӗсенче, икӗ кун хушши, Çӗмӗрлери йăвăç каскаласан комбинат çумӗнчи комсомол комитечӗн отчотпа суйлав пухăвӗ пулса иртрӗ. Комитет пухăва начар хатӗрленнӗ. Пухăва 206 комсомолӗцран 162 çеç пынă. Отчотра комсомол комитечӗ комсомолӗцсен политикăла пӗлӳлӗхне хăпартас, сойузра тăман çамрăксемпе хӗрсем хушшинче ӗçлес, комсомол йышне ӳстерес, сăтăрла ӗçсен йулашкисене пӗтерес тӗлӗшпе комбинатри комсомол организацинче мӗнле ӗçлени курăнмарӗ.

1937 çулти нйулӗн 1-мӗшӗнчен пуçласа кăçалхи нойабӗрӗн 15-мӗш тӗлне комсомол ретне 144 çамрăка илнӗ. Массă хушшинче тăрăшса ӗçлекен, политикă тӗлӗшӗнчен шанчăклă комсомолӗцсене ответлă ӗçсене куçарнă. Халӗ администрацине хуçалăх ӗçӗнче 4 комсомолӗц, инженерсемпе техниксем хушшинче 7, финанс, профсойуз, комсомол, совет организацисенче 7 комсомолӗц ӗçлеççӗ. Вӗсем хайсене хушнă ӗçсене ăнăçлăн туса пыраççӗ.

Комсомол организаци политвӗренӳ ӗçне çителӗклӗ йӗркелемен. Политграмăтă кружокӗсене 4, ПСК(б)П историйӗн кружокӗсене 2, тата август уйăхӗнче политграмăтă кружокӗсене çӗнӗрен 3 организациленӗ. Кружоксенче пӗринче те занятисем йӗркелӗ пулса пыраймаи. Пропагандиссем те вӗренекенсем те занятисене хатӗрленсе пыман.

Комсомолӗцсем хушшинче хутла сахал пӗлекенсем 8 çын. Çав комсомолӗцсене вӗрентес тӗлӗшпе комитет нимӗн те туман. Сойузра тăман çамрăксем хушшинче çителӗксӗр ӗçленӗ. Вӗсене пухусене чӗнмеççӗ, тӗрлӗ ӗçсене хутшăнтармаççӗ. Çавна пула та комсомол ретне илесси çителӗксӗр тăраť. Комбинатра пӗтӗмпе 1048 çамрăк ӗçлет, вӗсенчен комсомола кӗме хатӗрленсе çитнисем те чылай.

Комитет çулталăк хушшинче те 12 комсомолӗца çеç парти ретне кӗме рекомендаци панă. Комсомолӗцсене партине куçма комитет йенчен пулăшни сахал.

ПСÇЛКС Тӗпкомӗн VI-мӗш пленумӗ çӗнӗрен комсомола илнисем хушшинче ӗçлессине, вӗсене коммунисла воспитани парассине уйрăмах вăйлатма кирлине палăртса хăварчӗ. Комитет вӗсемпе начар ӗçленӗ, вӗсене общӗствăлă ӗçсене сахал хутшăнтарнă.

Комбинатра физкуљтурниксем 130 çын, вӗсенчен комсомолӗцсем 38 çеç. ГТО, ГСО, „Ворошиловский стрелок" значок нормисене парас ӗçе пӗр комсомолӗца та хутшăнтарман. Физкуљтурăн хӗллехи сезонне хатӗрленес ӗçе тытăнман. Çапла вара комитет физкуљтурă ӗçне вăйлатассинчен аякра тăнă.

Комсомол хуçалăхне те комитет йӗркелесе çитермен. 8 комсомолӗцăн личнăй делисем çук.

М. Йакăвлӗв.

Пӗр йалтан тухнă интеллигентсем

Тутаркас районӗнчи Йункă йалӗнче Октабӗр революциччен вӗреннӗ çынсем сахал пулнă. Халӗ кунта шкул çулне çитнисем пурте шкулта вӗренеççӗ. Туллимар вăтам шкулта—115 ача, вăтам тата аслă шкулсенче—20 çамрăк вӗренеççӗ. Колхоз çамрăкӗсем: Тойгиљдин, Куликов йулташсем институтра, Ишдутăв çар шкулӗнче вӗренет. Кăçал тата Тепейӗв авиаци шкулӗнчен политрук пулса килчӗ.

Йункă йалӗ тăван çӗршыва сахал мар квалификацилӗ работниксем панă. Акă, колхозник Шутейӗв—инженер. С. Тарасăв—чукунçул çинчи паллă стахановӗц, Тепейӗв—чукуçул çинчи техник, Моторкин—ветфељдшӗр, Салдакейӗв—агроном, 12 колхозник учителе вӗренсе тухнă.

П. И.

Совет Заполҗӗрин индустрийӗ хăвăрт вăйланса пыраť. Кирăвски руднийӗсем çӗршыва мӗлйуншар тоннă апатит рудн пачӗç те ӗнтӗ. Нумайах та пулмаť Мончегорскри пăхăрпа никӗл комбиначӗн пӗррӗмӗш черетри цехӗсене ӗçе йанă. Коља ҫурмаутравӗн енергетикă ресурсӗсем те пуйан: унти йухăнышывсем гидростанцисене ӗçлеттерме пӗр мӗлйун киловатт ытла енерги пама пултараççӗ. Кирăв йачӗпе тăракан Нива ГЭС 4 çул ӗçлет ӗнтӗ.
ӰКЕРЧӖК ÇИНЧӖ: Нива ГЭС III строительствинчи тинӗс узӗлӗн каналӗ. Туннелтен кăларнă тăприна турттарса кайаççӗ.
Б. Федосейӗв фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Хӗрлӗ Çар пурнăçӗ

Парти историне вӗренеççӗ

Совет Сойузӗн Геройӗ И. А. Лакейӗв йертсе пыракан çар пайӗнчи подразделенисенче парти историн Кĕске курсне вӗренме тытăннă.

Орденоносӗц капитан Николайенко подразделенинче нумайăшӗ пӗтӗм вăйа курса вӗренеççӗ. Тӗслӗхрен, войентехник Кукушкина илес. Кукушкин йулташ ПСК(б)П членӗ. Вăл подразделенинче комсорг пулса ӗçлет. Кукушкин октабӗр уйăхӗн малтанхи кунӗсенчех, хайӗн организацинчи комсомолӗцсене парти историн кӗске курсне вӗрентме тытăнчӗ.

Нумайах пулмаť, вӗсем парти истории III-мӗш сыпăкне вӗренме пуçларӗç.

Занятисене комсомолӗцсем пурте пӗр сиктермесӗр çӳреççӗ. Вӗренӳре кайа йулса пыракансене çийӗнчех пулăшса пыраççӗ.

Кĕçӗн командир Ишакăв—чăваш. Ăна комсомол ретне иртнӗ çуркунне илчӗç. Вăл Хӗрлӗ Çара киличчен йалти пуçламӗш шкулта кăна вӗреннӗ. Малтанхи вăхăтра политзанятисенче начартарах вӗренсе пынă. Халӗ ун çумне лайăх пӗлекен комсомолӗца çирӗплетнӗ. Вăл халӗ пӗтӗм вăйа хурса тăрăшса вӗренме тытăнчӗ. Вӗренӳ пахалăхне пур майсемпе те хăпартса пыраť.

Кукушкин йулташ йертсе пыракан организацинчи комсомол йышӗ куллен-кун ӳссе пыраť Пулашки вăхăтра икӗ красноармейӗца тата виçӗ кĕçӗн командира комсомол ретне илчӗç. Вӗсенчен тăваттăшӗ вӗренӳ отличникӗсем.

Кĕçӗн командир Зах. АНДРЕЙӖВ.

Инçет-Хӗвелтухăçне пурăнма йулаççӗ

Пирӗн Инçет-Хӗвелтухăçӗ—вăл вӗçӗ-хӗррисӗр уйăхирпе, вăрманна, çӗр айӗнчи тӗрлӗ йапаласемпе: тимӗр-тăмăрпа, ылтăнпа тата ытти пе те пуйан. Вăл çулсерен хаприк-савăтсемпе, совхозсемпе, колхозсемпе чечекленсе ӳсет. Пуйан та куљтурăлă пурăнаççӗ унти рабочисемпе колхозниксем.

Халӗ ӗнтӗ Инçет-Хӗвелтухăçӗ нимӗнле тăшман пырса тӗкӗнмеле мар хăватлă пулса тăчӗ. Кунта çулсеренех сахал мар красноармейӗцсем хăйсен службине тултарнă хыççăн хапрăк-савăтсене, совхозсене, колхозсене ӗçлеме йулаççӗ. Акă кăçал та № чаçри красноармейӗцсем Могилевец, Дунайӗв, Чугон, Кондратенко, Жевњак т. ыт. йулташсем те йаланлăхах ӗçлеме йулчӗç. Çаксем пекех чăваш красноармейӗцӗсенчен Андрейӗв, Клыкăв, Середин т. ыт. йулташсем те хăйсен Хӗрлӗ Çар службине тултарнă хыççăн малашне те çакăнтах йулма сăмах пачӗç. Вӗсем пурте комсомолӗцсем, çарӗç техникипе политикăлă вӗренӳри отличниксем.

Красноармейӗц Архипăв.

Отличнă вӗренетӗп

Епӗ 1937 çулта Хӗрлӗ Çара килтӗм. Çав вăхăтранпах пограничнăй чаçре пурăнатăп.

Инсекторский смотрта пур дисциплинăпа та отличнă, лайăх паллăсем илтӗм. Халӗ пирӗн чаçе çамрăк красноармейӗцсем килчӗç, епӗ вӗсене те хам пекех вӗрентме тăрăшатăп.

№ чаçри пограничник
И Д. Венский.

Çӗнелсе улшăннă Çӗнӗ Кипеç

ПАТĂРЙЕЛ. Октабӗрти Социалисăмлă Аслă революцичченЧӗнӗ Кипеç йалӗ тӗттӗм, начар йал пулнă. Пӗтӗм лайăх ана-çарансене Хăлимунпа Ахванис пуйансем йышăнса тăнă. Йалӗпе 45 кил. Вӗсенчен çурри ытла вырăлă-тутăлă пурăнса иртернӗ. Нумайӗшӗ ӗне усраса, сӗт-турăх çисе курайман. Ĕнесӗр çынсем 20 хуçалăх, лашасăр çынсем 15 хуçалăх пулнă. Хут пӗлекен çынсем йалӗпе те Кăсăлаппа анчах пулнă. Çырусем вулас-тăвас йе прошенисем çыртарас пулсан, йал çыннисем пурте Кăсăлаппа патне чупнă. Йала революцичченнимӗнле кӗнеке-хаçат та килмен.

Хресченсене патша кулаңайӗсем аптратса çитернӗ. Пӗр çул хушшинче кулаңайшăн 12 çынăнне ӗне, 9 çынăнне сарайсем сутнă.

Çӗрме пуйан Ахванис: „çӗр çинче Ахванис çӳлти турă"—тесе хресченсене хăратнă. Ахванис йалтан уйрăм хуттăр пек пурăннă.

Революци йала чӗрӗ сывлăш кӗртрӗ. 1929 çулта кунта 9 хуçалăхпа колхоз организациленет.

— Колхозра кăна епӗр хамăр телейе тупатпăр. Ленин кăтартнă çул пӗртен пӗр тӗрӗс çул,—тесе чухăнсемпе вăтамсем колхоза тӗреклетнӗ. Колхоз çулсерен ӳснӗ. Кулаксем колхоза хирӗç агитациленӗ, сăтăрланă. Колхоз вăйӗ вӗсене çапса çӗмӗрнӗ.

— Аллă çулран каçрăм ӗнтӗ, хаљхи пек нихăçан та кăмăлăм çӗкленмен. Сталин йулташ пирӗн пурнăçа кунсерен çăмăллатса пыраť. Сталинла Конституци чăнчăн çут хӗвел, ун çине çырса хунă хамăрăн аслă правасемпе усă куратпăр. Спасибă Сталин йулташа çак телейлӗ пурнăçшăн,—тет Творогов колхозник.

Вăл ӗлӗкхи вăхăтра çăвӗ-çăвӗпе кӗтӳ кӗтсе çӳренӗ. Йалти пуйансем ăна çын вырăнне шутламан. Халӗ кӗтӳçӗ—йалти хисеплӗ çын. Халӗ пур йенчен те çителӗклӗ пурнăçпа пурăнаť.

Йеленă Косолапăвă—вăтă колхозницă, анчах ӗçре çамрăксенчен йулмаť. Халӗ колхоз ферминчи сурăхсене пăхаť. Колхоза кӗнӗрен пех ударницă шутланаť. Тăрăшса ӗçленине кура ăна колхоз темиçе хутчен те премисем панă.

Колхозра чылай машинăсемпе ӗçлеççӗ. Колхоз пуçланнăранпа тырăсене çурлапа сахал вырнă. Авăна тăпачсемпе çапман. Хаљхи вăхăтра колхозăн тыр акмали машинăсем 2, тырă вырмали машинăсем 5, авăн çапмали машинăсем тата ыт. йалхуçалăх машинӗсем те нумай.

Кунпа пӗрлех, колхозлă йалăн куљтурлăхӗ те вăйлăн ӳснӗ. Революцичченйалта хут пӗлекен çын пӗрре анчах пулнă пулсан, пайанхи куна пуçламӗш шкултан вӗренсе тухнисем 120 çын, вăтам шкулсенчен вӗренсе тухнисем 58 çын, тӗрлӗрен курссенче вӗренсе вăтам пӗлӳ илнисем 11 çын, аçпирантурă пӗтернисем 2 çын, аслă шкул пӗтернисем 3 çын, халӗ пуçламӗш шкулта 91 ача вӗренет.

Колхозниксем пуйан пурнăç çулӗ çине тăчӗç. Ĕлӗкхи вăхăтра йалта 41 хура пӳрт пулнă. Халӗ вӗсен вырăнче пысăк та çутă пӳртсем лараççӗ. Иртнӗ çулта 11 хуçалăх çӗнӗ пӳртсем лартрӗç. Ĕнесӗр хуçалăхсем ӗнелӗ пулчӗç. Икӗ çул хушшинче 12 хуçалăх ӗне туйанчӗç. 2 хуçалăх велосипед, 2 хуçалăх—патефон, 15 хуçалăх—çӗвӗ çӗлемели машинсем туйаннă.

Куллен хаçат-журнал вуласси йалана кӗрсе пыраť. Колхозниксем 75 екземпљар тӗрлӗрен хаçат-журналсем çырăнса илеççӗ.

Пайанхи куна Çӗнӗ Кипеçри „Трактăр" колхозра 65 хуçалăх шутланаť.

Колхозниксен пурнăçӗ кунрансерен çӗнелсе лайăхланаť. Йединоличниксем колхоза кӗреççӗ.

Колхозлă йал кашни кунах пуйанланса, куљтурланса пыраť.

В. Петров.

Налог агенчӗсен ӗçӗсем

МĂН СĔНТĔР. Пашалукас йалсоветӗнче ӗçлекен налог агенчӗ Федăрăв йулташ укçа-тенкӗ пухас плана кварталтан кварталах тултарса пыраť. Вăл хайӗн тавра финанс активне йăвăçтарнă. Ăна укçа-тенкӗ пухас ӗçре уйрăмăнах „1-мӗш май" колхоз председателӗ Васильйӗв тата колхоз бригадирӗ Леонтйӗв, „Красный Октябрь" колхоз счетоводӗ Иванова Марийă тата ытти йулташсем те лайăх пулăшса пыраççӗ. Вӗсем колхозсемпе йединоличниксене укçа-тенкӗ парăмӗсене вăхăтра тӳлесе татма кирли çинчен каласа ăнлантараççӗ.

Çавăнпа пӗрлех колхозниксемпе йединоличниксен килӗсене кайса та ăнлантарса параççӗ. Çакăн пек ӗçленипе Пашалукас йалсовечӗ нойабӗрӗн 10-мӗшне 4-мӗш квартал финанс планне 64. процент тултарчӗ.

Çавăн пекех Мăн-Сӗнтӗр йалсоветӗнчи налог агенчӗ Лаптӗв йулташ та лайăх ӗçлеме пуçларӗ.

Шупуç йалсоветӗнчи налог агенчӗ К. Лаптӗв йулташ та тăваттăмӗш квартал планне 56,7 процент тултарнă. Лайăх ӗçленӗшӗн К. Лаптӗв йулташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачӗ 75 тенкӗ парса премиленӗ.

Пушкăртпа Йуманлăх йалсовечӗсенче ӗçлекен налог агенчӗ Йарц йулташ ССРС Верховнăй Совечӗн иккӗмӗш Çессийӗ йышăннă саккунсене йединоличниксем хушшинче лайăх ăнлантарса параť. Çакна май йалсоветӗнче 10 хуçалăх колхоза кӗчӗç. Пушкăрт йалсовечӗ нойабӗрӗн 13-мӗшне тăваттăмӗш квартал финанс планне 49,4 процент тултарчӗ.

Анчах районра начар ӗçлекен финагентсем те пур-ха. Калайкас йалсоветне кӗрекен Кораккасинче йединоличниксенчен 17 хуçалăхран пӗр хуçалăх çеç лаша çине хуракан налога 140 тенкӗ тӳленӗ. Ытти хуçалăхсем пӗр пус та тӳлемен. Налог агенчӗ Храмăв активиссемпе пӗрле ӗçлемест. Пӗр кварталта та укçа-тенкӗ планне тултарман.

Пр. Иаркуњкин.

Финанс активӗ ӗçлемест

Çӗнӗ Пăва (Йелчӗк районӗ) йалсоветне кӗрекен йалсенче йединоличниксен лашисем çине хунă налога пухасси питӗ йăпăх пыраť. 15.800 тенкӗ вырăнне 2.158 тенкӗ анчах пухнă.

Йалсовет работникӗсем, налог агенчӗ тата йалсовет çумӗнчи финанс активӗ массăпа ӗçлемеççӗ. Укçа-тенкӗ пухасси çинчен халăха ăнлантарса памаççӗ. Налог агенчӗ П. Пунин йулташ йединоличниксем хушшинче укçа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе начар ӗçлет. Çакна пула кăшпӗр йединоличник хуçалăхӗсенче пиншер тенкӗ парăм шутланаť. Турхан йалӗнчи К. Семенăв лаша çине хунă налога пӗр пус та тӳлемен. К. Семенăв йединоличник çинче 880 тенкӗ ытла парăм шутланаť.

Çӗнӗ Пăва йалсовечӗ ытти тӳлевсем йенӗпе те йулса пыраť. Йалхуçалăх налог укçине пухмали плана 14,43 процент анчах тултарнă.

Н. Фомин.

Чăваш АСС Республикӗнче 4-мӗш кварталта укçа-тенкӗ пухас плана мӗнле тултарнине кăтартни
(Нойабӗрӗн 21-мӗшне, процентпа)

РАЙОНСЕМ	Плана тултарнă
Улатăр	46,5
Елӗк	41,8
Патăрйел	32,1
Вăрнар	41,3
Йӗпреç	25,6
Ишлей	32,4
Канаш	29,6
Куславкка	40,3
Хӗрлӗ Чутай	42,8
Кувакнна	42,9
Сӗнтӗрвăрри	36,7
Пăрачкав	42,9
Турхан	34,6
Тутаркас	42,8
Трак	37,6
Вăрмар	39,2
Çӗрпӳ	37,4
Шупашкар	48,5
Шăмăршă	39,8
Шăхасан	40,7
Шăнкăртам	56,1
Çӗмӗрле	30,3
Йетӗрне	46,8
Йелчӗк	37,5
Тăвай	38,1
Улатăр хули	46,1
Канаш хули	43,8
Шупашкар хули	49,4
Республикӗпе	39,0

Активпа ӗçлемен пирки йулса пыраť

Карай йалсовечӗ (Трак р.) активпа çителӗксӗр ӗçлет. Çекцисен ӗç планӗсем çук. Советсен кунне вăхăтра тата йӗркелӗ иртерсе пымаççӗ. Иалсовечӗ çекци руководителӗсене нимӗнле кăтарту та памаť. Ку вăхăта çитсе çекци руководителӗсен отчотне пӗр хут та итлемен. Çакна пула ӗнтӗ çекцисем начар ӗçлесе пыраççӗ.

Выљăх-чӗрлӗх йенӗпе ӗçлекен çекци пуринчен те начар ӗçлет. Йалсоветӗнче выљăх-чӗрлӗх ӗрчетмели государствă планне тултарман. Сыснӑсем 675 пуç пулмала пулсан, 467 пуç анчах. Ĕнесем 580 пуç вырăнне 533 пуçа анчах çитнӗ. Çекци руководителӗ И. Абрамăв йулташ уйрăм колхозсенче выљăх-чӗрлӗх ӗрчетесси мӗнле пынипе интересленмест.

Çулйӗр çекцийӗ те çителӗклӗ ӗçлемест. Чул 525 кубла метр кăларса турттармала пулсан, 205 кубла метр анчах турттарнă.

Карай йалсовечӗ çекцисен ӗçне çӗнетменнине тата актива ӗçе хутшăнтарманнине пула ытти чылай ӗçсем тăрăх та йулса пыраť. Государствăна çӗрулми тăратас плана 65 процент, аш-какай 75 проц., сӗт-çу 83 процент, сӳскантăр 42 процент çеç тултарнă т. мт. те.

Йалсовечӗ лайăхрах ӗçлеме пултараť. Актив пур. Вӗсем каланине итлемеле, панă сӗнӳсене пурнăçласа пымала.

И. Петров.

Бољшевикла тимлӗхпе ӗçлени кирлӗ

Выљăх-чӗрлӗх ӗрчетме панă государствă планне пурнăçа кӗртес ӗçре Трак районӗ хăшпӗр çитӗнӳсем тунă. Иртнӗ çулхипе танлаштарсан, кăçал лашасен шучӗ 3,5 процент, ӗнесем 12,2 процент, сыснасем—1 процент ӳснӗ. Анчах, йышланса пыракан выљăх-чӗрлӗхсене хупса усрамали çурт-йӗрсем пур колхозсенче те çителӗклӗ мар, „12 лет Октября", Молотăв йачӗпе тăракан тата „Çӗнӗ йал" колхоз фермисенчи выљăхсене хӗл каçарма ăшă витесем пачах çук. Витесем тума пана 1400 кубла метр йăвăçран 123 кубла метрне райлесзагра ӗçлекен работниксем хăйсен нушисем валљи салатса йанă. Çавăн пекех, фермăсенче çурт-йӗрсем тума панă ссудăна та 39 пин тенкӗрен 9 пин тенкипе çеç усă курнă.

Партин облăçри XIX-мӗш конференцийӗ райкомсемпе райӗçтăвкомсен тата çӗрӗç пайӗсен уйрăмăнах колхозниксем хушшинче ӗнесӗрлӗхе пӗтерессишне çине çавăрăнса пăхмала, тесе кăтартса хăварнинчен Трак районӗнчи партипе совет тата çӗрӗç оргăнӗсем хăйсене валљи халиччен кирлӗ вывăд туман-ха. Районра ӗне выљăх усраман колхозниксем 920 хуçалăх. Партипе правительствă колхозниксем хушшинче ӗнесӗрлӗхе пӗтерме панă 10 пин тенкӗ ссудăран 7 пин тенкипе çеç усă курнă.

Выљăх-чӗрлӗх ӗрчетме панă государствă планне ăнăçлăн тултарас çӗрте ветеринари работникӗсем те пысăк вырăн йышăнса тăраççӗ. Ку ӗç çине Чăваш Çӗрӗç халăх комиссариачӗ те тивӗçлипе çаврăнса пăхмаť. Пайанхи куна Трак районӗнче 2 ветврач, 3 зоотехник, аслă зоотехник тата ăратлă выљăхсем йенӗпе ӗçлеме тепӗр специалис çитмест.

Трак районӗнчи партипе совет тата çӗрӗç оргăнӗсем социалисăмлă выљăх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗçе тивӗçлипе йертсе пымала. Партин облăçри XIX-мӗш конференцийӗ çӗрӗç оргăнӗсене ăратлă выљăх-чӗрлӗх ыйтăвне татса парас ӗçе бољшевикла тытăнма, выљăхсен продуктивлăхне татăклăн хăпартма, выљăхсене пăхас ӗçе лайăхлатма, вӗсене хӗл каçарма хатӗрленес тӗлӗшпе халех кирлӗ пек ӗçсем туса иртерме хушса хăварнине пурнăçлама бољшевикла тимлӗхпе тытăнмала.

Г. Закамский.

Кашни амаран вуникӗ çурă

ЙЕТĔРНЕ. Пошнарти Никитă Йакăвлӗв йулташ ферма организациленӗренпех фермăра ӗçлет. Вăл ӗçсене йаланах вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыраť.

Халӗ Йакăвлӗв йулташ хăй çумне 8 сысна ами çирӗплеттерчӗ. Çулталăк хушшинче кашни амаранах вуникшер çурă илме обйазательствă пачӗ. Вăл хăйпе пӗрле ӗçлекен Коротков йулташпа ăмăрту договăрӗ тунă.

Г. В. Корољков.

Район çаплах йулса пырат

Йетĕрне районĕн çĕрулми хатĕрлев планне вăхăтра тултарма пур условисем те пулнă. Районри партипе совет тата хатĕрлев организацисем государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарас ĕçре ĕççыннисен политикла активлăхĕпе çителĕклĕ таран усă курман. Çавăнпа та Шăмат, Мăн-Чураш, Хучаш, Уйкас, Тинкеш йалсовечĕсем çĕрулми хатĕрлев планне тултарас ĕçре питĕ кайа йулнă. Ку йалсоветсене кĕрекен йалсенче массăлă йнлантарулă ĕç пачах çук. Хучаш йалсоветне кĕрекен Хурамалăх колхозĕ 67 центнĕр, колхозниксемпе йединоличниксем 318,3 центнĕр, Анат-Йаваш колхозĕ 38,5 центнĕр государствăна çĕрулми парса татман. Хĕрлĕ Çырпа Йекĕмушкин йалĕсенчи колхозниксемпе йединоличниксем государствăна çĕрулми пама тытăнман та. Йалсовет председатĕлĕ Калашникăв йулташ активла хăйĕнчен сивĕтсе пĕтернĕ, йалсовечĕн пĕр çекцийĕ те ĕçлемест.

Районри хатĕрлев уполномоченнăйĕн агĕнчĕсем те хăйсен участкисенче сахал пулаççĕ. Лайăх ĕçлекен агĕнтсен примерĕсемпе усă курмаççĕ. Акă, Белов агĕнт хăйĕн участкинче çирĕм кун хушшинче 992 центнĕр çĕрулми пухнă. Анчах унăн примерлă ĕçĕсемпе нихăш агент та усă курмаст.

Сĕт-çу, аш-какай пухассипе те хатĕрлев уполномоченнăйĕн агĕнчĕсем йапăх ĕçлеççĕ. Сĕт-çу парас плана Сарйел йалсовечĕ 51 проц., Йĕкĕт йалсовечĕ—52 проц., Чурпай йалсовечĕ 47,9 проц. çеç тултарнă.

Ник. Цветков.

Дисциплинă çук

ÇĔРПУ. Йансакасси йалсоветĕнчи „Политотдел" колхоз пайанхи куна çĕрулми хатĕрлев планне тултарман. Натурплатă тырри 135 центнĕр парса татман. Государствăран ссудă илнĕ тырăна 12,64 центнĕр тавăрса паман. Çавăн пекех „Политотдел" колхоз государствă умĕнче сĕç-кантăр, пахчаçимĕçсем, аш-какай хатĕрлев планĕсене те тултарман. Иккĕмĕш бригадă халиччене авăн çапса пуçтарман. Колхозра ĕç дисциплини çирĕп мар. Выльăх апачĕсем çĕреççĕ. Ыраш кĕлтисене çапнă хыççăнах çĕмеле хывман пирки кĕрхи çăмăрпа йĕпенсе хуралса кайнă.

М. Федăрăв.

Государствăна 850 центнĕр тырă сутнă

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, нойаберĕн 23-ш. (Телефон тăрăх). Пайанхи куна колхозсенче государствăна 2163 центнĕр тырă сутма йышăннă. Райсойуз 14 колхозран 1514 центнĕр тырă илме договăр тунă. Вăл шутран 8 колхоз кооперации урлă государствăна 850 центнĕр сутнă та. „Хĕрлĕ Сормово" колхоз государствăна 120 центнĕр тырă сутса пĕр молотилкă, витмели тимĕр илме зайавкă панă.

Н. Иванов.

Колхозниксем тырă сутаççĕ

МĂН-СЕНТЕР. Районри пур колхозсенче те колхозниксем кооперации урлă государствăна тырă сутма пуçларĕç. Акă, Орпашри „Смычкă" колхоз членĕсем 60 центнĕр, Йункăри Мичурин йачĕпе тăракан колхоз членĕсем 60 центнĕр, „Родник" колхозри колхозниксем—85 центнĕр, „1-мĕш Май" колхоз членĕсем—76 центнĕр тырă сутнă.

П. Й.

435 центнĕр тырă сутнă

Подьанкăри (Йетĕрне р.) Кирăв йачĕпе тăракан колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илчĕ. Колхозниксем ĕçкунĕпе пысăк тупăш илчĕç. Халĕ колхозниксем хăйсен ытлашши тыррисене государствăна сутаççĕ. Колхоз государствăна 200 центнĕр, колхозниксем 135 центнĕр сутнă. Чурпай колхозĕ 100 центнĕр сутнă.

Н. Ц.

Автомашинăсем туйанаççĕ

„Волонтĕр" колхозри (Вăрнар р.) ĕне ферми çултан çулах выльăхчĕрлĕх ĕрчетмели плана ытлашшипех тултарса пырат. Государствăна аш-какай, сĕт-çу вăхăтра параççĕ. Кăçал государствăна обйазатĕлствă йĕркипе панисĕр пуçне 12 пин литр сĕт сутса колхоз çак кунсенче пĕр автомашинă туйанчĕ. Çавăн пекех Чăрăш Хирлепри „Радио" промколхоз та государствă вальли кирпĕч туса пĕр автомашинă туйанчĕ.

Н. Козлов.

ПЕРЕПИÇ УМĔН

Лайăх хатĕрленетпĕр

Именĕвари (Трак р.) вăтам шкулта вĕренекен комсомолĕцсемпе пионерсем халăх перепиçне хатĕрленме тытăнчĕç. Правительствă халăх перепиçĕ çинчен кăларнă саккуна, инструкцисене кашни класра, отрйадра вĕренеççĕ.

Çавăн пекех вĕренекенсем халăх перепиçне хатĕрленес тĕлĕшпе халăх хушшинче те аван ĕçлеççĕ. Нойаберĕн 17-мĕшĕнче шкулти комсомол комитечĕ пуçарнипе Шурча йалĕнче вечĕр туса иртерчĕç. Унта 1939 çулхи халăх перепиçĕ çинчен учител-комсомолĕц М. Сергейĕв йулташ доклад туса пачĕ. Доклада колхозниксем питĕ интересленсе итлерĕç.

Колхозниксем перепиç çинчен докладсем, калаçусем ытларах ирттерме сĕнÿ параççĕ.

Доклад хыççăн драмкружок А. Львова çырнă „Тăван çĕршывшăн" пйесăна лартса пачĕç. Хор кружокĕ тĕрлĕрен йурăсем йурласа кăтартрĕ.

Мих. Александрăв.

Перепиçе хатĕрленеççĕ

ТРАК. Район 1939 çулти йанварте пулса иртекен Пĕтĕм Сойузри халăх перепиçне ирттерес ĕçе хĕрÿлĕнех хатĕрленме тытăнчĕ. Пайанхи куна перепиç ĕçĕнче кирлĕ кадрсене çителĕклĕ таран хатĕрлесе çитерне. Вĕсемпе мĕнле ĕçлемели çинчен уйрăмăн калаçу туса ирттернĕ.

Перепиçе лайăх ирттерес тĕлĕшпе районри партипе комсомол организацийĕсем аван пулăшса пыраççĕ. Комсомол организацийĕ ку ĕçе туса пыма чи шанчăклă çирĕп комсомолĕцсене 32 çын уйарса пачĕ. Нойаберĕн 5-мĕшĕнче пулса иртнĕ комсомолăн районри пухăвĕнче йатарласах перепиç çинчен сÿтсе-йаврĕç.

Пуху перепиç ĕçне политикăлă хак парса ăна ташманĕсем пăсассине хирĕç кĕрешме, массăлă-йанлантарулă ĕçе вăйлатма пур комсомол организацисене те çирĕппĕн хушса хăварчĕ.

А. Киçельов.

Кăтартулă тата пахалăхлă

МĂН-СЕНТЕР. Чылай йалсоветсемпе колхозсенче халăх перепиçĕ çинчен массăлă йнлантару ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Йаваш йалсовечĕ перепиçе пур йенчен те кăтартулă, пысăк пахалăхпа хатĕрленет. Йалсоветне кĕрекен пур колхозсенче те халăх перепиçĕ çинчен пухусенче сÿтсе-йавнă. Йатарласах хĕрарăмсен пухăвĕсем туса ирттереççĕ. Йалсовечĕ перепиçе пур йенчен те çителĕклĕ таран хатĕрленсе, кăтартулă ирттерес тĕлĕшпе Торай йалсовечĕпе социалисăмлă ăмăртува тухрĕ. Ăмăрту договăрне пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Вулав çурчĕ çумĕнчех перепиç кĕтесĕ организациленĕ.

Çавнашкалах Йункă йалсовечĕ те перепиçе лайăх хатĕрленет. Ку йалсоветри колхозсенче перепиç çинчен йнлантаракан çынсем уйăрнă, вĕсем халĕ колхозниксемпе йединоличниксене перепиç материалĕсемпе паллаштараççĕ. Йункă йалсовечĕ перепиçе аван ирттерес тĕлĕшпе Шупоç йалсовечĕпе ăмăртса ĕçлет.

Пр. Йаркуньçкин.

Почтальйонсен районри канашлăвĕ

Çĕмĕрлере почтальйонсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу пĕр йыту—1939 çулшăн хаçат-журнал сарас ĕç çинчен сÿтсе-йаврĕ.

Канашлăва почтальйонсемпе почтă агĕнчĕсем, пĕтĕмпе 45 çынна йахăн пухăннă, вĕсенчен 12 çын тухса каларĕç. Тухса калакансем пурте пекех районра хаçат-журнал сарас ĕç начар тăнине, Сойузпичетĕн районри уйрăмĕ (заведуйушчийĕ Йегорăв) хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕç.

Сойузпичетĕн районри уйрăмĕ уйрăмах „Чăваш Коммунĕ" тата районра тухса тăракан „Социалисăмлă ĕç" хаçатсене сарас йенĕпе начар ĕçлет.

Районра хаçат-журнал сарассипе Çĕмĕрле, Мыслец, Иандаш йалйалĕсенчи почтальйонсем ытла та начар ĕçлеççĕ. Çĕмĕрле йалĕнче пĕтĕмпе 259 хуçалăх, анчах кунта хаçатсем пĕтĕмпе те 34 екземпльар кăна çырăнса илеççĕ. Подписчиксен йышĕ сахалли чи малтанах хаçат-журнал сарас ĕçпе йалсовет интересленменнинчен килет. Иртнĕ икĕ уйăхра 4 почтальйона улăштарнă. Халĕ почтальйонра ĕçлеме çул çитмен çамрăк ачана—М. Лаврентйĕва хушнă. Вăл хаçат-журналсене тепĕр чухне подписчиксем патне 5—6 кунран çеç çитерет.

Мыслецри почтальйон Иванова йулташ та начар ĕçлет. Мыслец йалне пĕтĕмпе те 21 екземпльар çеç хаçат-журнал килсе тăрат.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе районра лайăх ĕçлекенсем те сахал мар. Улхашри (начальникĕ Соловйов,) тата Хутарти (начальникĕ Лем) почтă уйрăмĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Улхаш почтă уйрăмне тĕрлĕрен хаçат-журналсем пĕтĕмпе 767 екземпльар пыраççĕ. Почтă уйрăмне кĕрекен йалсенче кашни килех хаçат-журнал илсе тăрат.

Хутарти почтă уйрăмне пĕтĕмпе 575 екземпльар пырат. Кунта хаçат-журнал сарассипе Мартынăв, Кĕçĕн Тăванти Угодин лайăх ĕçленине палăртмала. Вĕсем çÿрекен йалсенчи кашни кил хаçат-журнал çырăнса илет. Мартынăвпа Угодин хаçат-журналсене потписчиксем патне вăхăтра çитереççĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн вĕсене иккĕшне те Сойузпичетĕн районри уйрăмĕ 100-шер тенкĕ укçа парса премиленĕ.

Ĕççыннисем хушшинче хаçат-журналсем ытларах сарасси, вĕсене подписчиксем патне вăхăтра çитересси—почтальйонсен чыслă ĕçĕ. Почтальйонсен кашни кил хаçат-журнал çырăнса илмеле тăвас пулат. Канашлăва пухăннă почтальйонсем çак задачăсене пурнăçлас майпа пĕр-пĕрипе социалисăмлă ăмăртăва тухрĕç. Хăйсем пек ĕçлеме Иетĕрне районĕнчи почтальйонсене ăмăртăва чĕнчĕç.

М. Й.

Сталинла Конституци кунне хатĕрленеççĕ

КАНАШ. А. Ç. Çеменăв йулташа Шаккăл йалсовет председатĕлне 1936 çулта суйларĕç. Хăйне суйланă кунранах вăл йалсоветне малти вырăна кăларассишĕн тăрăшса ĕçлерĕ. Шаккăл йалсовечĕ кашни кварталтах государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарса, укçа-тенкĕ пухас плана йнăçлăн пурнăçласа пычĕ. Йалсовечĕ 3-мĕш квартăл финанс планне 128 процент тата 4-мĕш квартăл финанс планне 65 процент тултарчĕ. Çапла ĕçленине пула комсомолĕц А. Çеменăв йулташ йертсе пыракан йалсовет районта малта пыракан йалсоветсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Канаш райĕçтăвкомĕн пленумĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйавра йалсоветне куçса çÿрекен хĕрлĕ йалав пачĕ.

Халĕ йалсовечĕ Сталинла Конституци кунĕ тĕлне татах та пысăк çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешет.

А. Кириллăв.

Машинăсĕн хисепĕ ÿсет

Куславкка районĕнче 1929 çулта мĕн пурĕ те пĕр трактăр çеç пулнă. Халь районра 83 трактăр, 12 комбайн, 34 автомашинă пур. Вăл шутран кăçал 20 автомашинă, 9 комбайн, 11 трактăр туйаннă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Канашри вакунсем йусакан савăтри урапа цехĕнчи токăр-стаханăвĕц Борис Самарин, нормăна 300 процент тултарат.

Г. Костин фото-ÿкерчĕкĕ.

Ÿсĕмсемпе лăпланнă

СЕНТЕРВĂРРИ. Малти-Шĕнерпуçĕнчи „Древообделочник" промысла ертелĕ ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем (çуна, урапа, сĕтел-пукан) туса кăларат. Çултаăк планне ертел октăберĕн 1-мĕшнех 125 процент тултарнă.

Тунă çитĕнÿве çирĕплетсе малашне татах та лайăхрах ĕçлес вырăнне йулашки вăхăтра ертел руководителĕсем лăпланса ларчĕç. Чылай ĕçсенче ответсăрлăх, хуçасăрлăх сисĕнет. Шыва хутнă курăссене кăларса типĕтмен, вăрман касса хатĕрлемен. Стольарнăй цеха тума пуçлани иккĕмĕш çул çитет пулин те, халĕ те туса пĕтермен.

Йулашки вăхăтра членсем хушшинче ĕç дисциплини те йапăхланчĕ. Ертелте 120 çынран кайа мар ĕçлес вырăнне хăшпĕр кун 19 çын çеç ĕçлет. Ыттисем хăйсен килĕсенче пасарта сутма урапаçунасем, трантассем тăваççĕ. Правлени председатĕлĕ Захарăв йулташ членсене çитес уйăхсемшĕн тÿлесе 6.000 тенкĕ расхутланă. Производствă пуçлăхĕ Данилăв хăй çумне иртнĕ çулта 602 тенкĕ, кăçалхи çул 1016 тенкĕ укçа илнĕ. Ăна ответ тыттармаççĕ.

Ертел йапăх ĕçленĕшĕн пĕтĕмпех правлени членĕсем айăплă.

Н. Йашков.

Виçшер нормă

Куславкка комбинатĕнчи стольарнăй цехра ĕçлекен стаханăвĕц-станочник Сольникăв йулташ октăбĕр планне 291 процент, каскалакан цехри станочницă Мйаçникова йулташ 135 процент тултарнă. Çак йулташсем иртнĕ уйăхра тунă çитĕнÿсене çирĕплетсех пыраççĕ. Сольникăв йулташ халĕ те нормăна 290 процентран кайа мар тултарат.

Механически цехри тимĕрç Устинăв йулташ татах та пысăк тĕслĕхсем кăтартат, вăл куллен нормăна 300 процент тултарса ĕçлет.

А. Мошков.

Ăмăртса ĕçлекен сменăсем

КУСЛАВККА. Комбинатри каскалакан цехра Н. Илйин йулташ йертсе пыракан сменă В. Илйин йулташ сменипе ăмăртса ĕçлет. Октăбĕр уйăхĕнче Н. Илйин йулташ смени плана 110 процент тултарса малти вырăна тухрĕ. Чылай стаханăвĕцсем виçшер нормă тултараççĕ. Октăбĕр уйăх планне 330 процент тултарнă торцовшчицă М. Илйина йулташ халĕ те çав виçерен чакмаст. В. Петухова, И. Парашина йулташсем куллен икшер нормă тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсем октăбĕр уйăх заданине те 200 процент ытла пурнăçа кĕртнĕ.

Анчах цех плана йнăçлăн тултарса пыраймаст-ха. Материал çитмен пирки час-часах простой пулат. Комбинат руководителĕсен рабочисене ĕçлеме йĕркелĕ майсем туса памалла.

Г. Кузнецов.

Выйăнти промышленнăçăн çĕнĕ предприйатийĕсем

1939 çулта Чăваш республикинче квас тумалли виçĕ çĕнĕ савăт тăваççĕ. Вĕсем Çĕрпÿре, Йĕпреçре, Кувакинăра пулаççĕ. Вăл савăтсене тума „Росглавпиво" 55 пин тенкĕ укçа парат.

1939 çултах Шупашкарта сĕте йÿçĕтсе тĕрлĕ çимĕçсем хатĕрлекен çĕнĕ савăт лартаççĕ. Вăл савăта тума „Росглавмолоко" 20 пин тенкĕ укçа уйăрат.

Хĕллене йапăх хатĕрленнĕ

Предприйатисем IV-мĕш квартăл планне йнăçлăн тултарасси, хĕллехи вăхăтра татти-сыпписĕр, пĕр чăрмавсăр ĕçлесе пырасси, хĕллене вăхăтра тата кăтартулă хатĕрленнинчен чылай килет. Предприйатисен хĕллене кăтартулă хатĕрленес пулсан корпуссемпе цехсене, производствă таврашĕсене, хватерсемпе общежитисене, клубсене, столовăйсене, мунчасене йусаса пĕтермеле, цехсене ăшăтмала, çунтармали, чĕрĕ тавар, технологилĕ-вспомогатĕльнăй материалсем хатĕрлесе çитермеле. Хĕллене йнăçлăн, лайăх хатĕрленнипе предприйатисене стаханăвла ĕçлеме пур условисем те туса памала.

Çапла пулин те республикăри хăшпĕр предприйатисем хĕллене хатĕрленсе çитмен. Сăмахран, Çĕмĕрле комбинатĕнче чылай цехсенче çĕмрĕк чÿречесене кантăксем лартса пĕтермен, хĕллехи рамăсем çук, алăксене йусаман. Пиломатериалсем хумали складра, контора чÿречисене лартман, ăшнĕ шуратман. Хăма çуракан цехра алăксене йусамала, кантăксем лартмала, слесарнăй мастерскойне ăшăтма стена çумне тăпра тултармала. Урапа цехĕнче хатĕр продукци хумали складăн чÿрече рамисем çук. Стольарнăй цехăн пукансем тăвакан потокри иккĕмĕш хутĕнчи клуба йусаса, алăксене кошмапа çапса тухмала, упаковăчнăй отделенинче алăксене йусамала. Анчах пайанхи куна çаксене туман-ха.

Çĕмĕрлĕри кирпĕч савăтĕнче ултă хватере йусаман: иккĕмĕш рамăсене кантăксем лартса вырнаçтарман, урайсене хĕстермен, кăмакасем туса тата йусаса пĕтермен, алăксене, стенасене-тепĕр хут çапса тухман.

Деткомиççи савăтĕнчи (Çĕмĕрле р.) пичке-катка цехне ăшăтман, урайсене хĕстерсе кăмакана туса пĕтермен, сарайсене йусаман, електропроводсене те тĕрĕслесе тухман. Квас тăвакан савăтра, „Красный Октябрь" ертел мастерскойĕнче иккĕмĕш рамăсене лартман, урайсене, кăмакасене тата алăксене йусаман.

Хĕллене хатĕрленес ĕç Иетĕрнери çу тата спирт савăчĕсенче те начар пырат. Çу савăчĕн складсен кĕтессисем çĕрнĕ, шăтнă амбарсенчен (2—4-мĕш № амбарсем) çу кăлармали вăрăсем йухаççĕ. Икĕ савăтĕнче те рабочисемпе инженерла-техникла работниксем пурăнакан хватерсене йусаса пĕтермен, чылай хватерсенче електричествă çути çук, електропроводсем йусавлă мар. Кăмакасене кирлĕ пек купаламан пирки рабочисен самоварсене чÿрече йанаххисем çине лартма лекет, апат-çимĕçе те голландски кăмакара хатĕрлеме тивет. Кĕпе-йĕмсене, спецовкăсене, коридорта çаваççĕ. Чылай çуртсенче иккĕмĕш рамăсем лартман. Çу савăтĕнчи хăшпĕр çуртсен тăррисем шăтăк, шыв анат. Столовăй çуртне çавĕпех йусарĕç пулин те, халĕ те йусаса пĕтермен-ха. Рабочисен клубне те йусаман. Производствăлă цехсене ăшăтасси вăраха кайат, çĕмрĕк чÿречесене тата иккĕмĕш рамăсене лартса пĕтермен. Спирт савăтĕнче те 5 складран тырă хума иккĕшĕ çеç йурăхлă, ыттисем, вĕсене хăмасемпе çеç тунă пирки, тырă хума шанчăклă мар. Çак савăтăнах çу савăчĕн территорийĕ витĕр тухакан канализаци йĕркелĕ ĕçлемест, склада шыв кĕрет. Икĕ савăт дирекцийĕ хушшинче кирлĕ ыйтува татса парас ĕçре çирĕп çыхăну, килĕштерÿ çук, çавна май клубпа, мунчапа кирлĕ пек усă кураймаççĕ, килçуртсене тасатмаççĕ т. ыт. те.

Чăвашмельтрест предприйатийĕсем те хĕллене начар хатĕрленнĕ.

Район промышленнăçне кĕрекен предприйатисем тăрăх та хĕллене çав тери йапăх хатĕрленчĕç. Сăмахран, Шăмăршăри ată-пушмак тăвакан тата стольарнăй мастерскойсенче кăмакасем, алăксем т. ыт. йусавлă мар. Стольарнăй мастерской таврашĕнче йăвăç материалсем, отходсем сапаланса выртаççĕ. Йелчĕкри крахмал савăтĕнче те çавăн пекех. Анчах руководителĕсем айăпа хăйсем çинчен сирсе йарас тесе, тĕрлĕрен обйективлă сăлтавсем çеç тупса лараççĕ.

Хĕле кĕтĕмĕр. Кайа йулнă пулсан та, хĕллене хатĕрленес тĕлĕшпе тумасăр хăварнă ĕçсене халех туса çитермеле.

Р-в.

Йаланах пĕр тĕслĕ апат

Вăрнар вăрманпромхоз столовăйĕнче рабочисене тутлă та йÿнĕ апат çитерессишĕн тăрăшмаççĕ. Йаланах пĕр тĕслĕ апат—йашка тата кĕсел, чей пулат. Котлетă, антрекот т. ыт. апатсем çийес киллсен, кирлĕ продуктăсене килтен илсе пырас пулат.

Апат çимелли хатĕрсем çителĕклĕ мар, час-часах вилкă вырăнне çĕçĕ йе кашăк параççĕ. Вĕсем те тутăхса кайнă.

Иевлампйĕв.

СЛАНĔЦ РУДНИКĔНЧЕ

Кунта ĕмĕр-ĕмĕр хура вăрман кашласа ларнă. Шурлăхлă вырăн пулнă. Вăл вăрман урлă Кире шывĕ кукăр-макăр авкаланса йухнă. Вăрман варринче, Буинскпа Липăвкă хушшинче ансăр çул пулнă.

Пĕрехинче Кире шывĕ çывăхĕнчи вырăнсене 9 çынтан организациленĕ експедици килнĕ. Вăл сăнавлă ĕçсем туса ирттерсе Буинск разйезĕ çывăхĕнче 2 мĕлйун тоннă ытла сланĕц запасĕ пуррине палăртнă. Сăнавлă ĕçсем çинчен тĕпчев институтне тата Мускава пĕлтернĕ.

Çакăнти сланĕц руди хапрăк-савăта ĕçлеттерес тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăнса тĕнине шута илсе правительствă 1931 çулта Буинск разйесĕ çывăхĕнче сланĕц рудникĕ тума палăртнă. 1931 çулта хĕрÿлĕ ĕçсем пуçланнă. Кашласа ларакан вăрмана касса усна. Шахтă чавнă. 1932 çулта сланĕц рудине кăларма тытăннă.

Малтанхи çулсенче сланĕц чавса кăларнă çĕрте механисăмсем пулман. Инженерсемпе техниксем те сахал пулнă. Хĕрÿ ĕçсем çуллахи вăхăтра çеç пынă. Хĕлле чарăнса ларнă. Рабочисене пурăнмали çуртсем пурĕ те икĕ çурт çеç пулнă. Вăйлă строительствă ĕçĕсем 1935 çулти кĕркуннерен пуçланса кайнă. Сланĕц кăлармали вырăн (естакадă) тата кĕперсем тунă. Шахтăра подкрепленисем тума тытăннă. Рабочисене пурăнмали икшер хутлă çуртсем тата пекарньă туса пĕтернĕ. Иртнĕ икĕ çул хушшинче строительствă ĕçе татах та вăйланнă. Сланĕц кăларас ĕçе механизациленĕ. Сланĕца та алпа йе лашапа мар, машинсемпе хăпартма тытăннă. Пысăк електростанци никĕсне хывнă. 1937 çулта чукунçул, мунча, водопровод, депо тата рабочисене пурăнмали икшер хутлă çуртсем туса пĕтернĕ. Плотина тата кирпĕч савăчĕ тунă.

Буинскри сланĕц рудникĕ çулсемпе мар, сехетпе ÿссе вăйланса пырат. Авалхи ансăр çул халĕ тикĕс те йака. Унăн икĕ йенепĕ канавсем, икĕ хутлă илемлĕ çуртсем. Вăл çуртсенче шахтĕрсем савăнса пурăнаççĕ

Çак кунсенче 900 киловатлă електростанци ĕçе кайат. Вăл руднике кăна мар, Буинск поçолăкне те çутатат. 800 çын вырнаçмалăх клуб, 400 ача вырнаçмалăх шкул тата 40 çемйе вырнаçмалăх пысăк çуртсем тума тытăннă. Стадион, пульницă городокĕ пулат.

Сланец рудникне çĕнĕ çулта ĕçе йарсан унта 2000 çын ытла ĕçлемеле. Халĕ кунта ĕç вĕресе кăна тăрат. Вырăсĕ, тутарĕ, чăвашĕ, мордва, украинĕц—пурте пур кунта. Вĕсем пĕр çемйери пек килĕштерсе пурăнаççĕ.

Социалисăмлă ĕçĕн меслечĕсем хисеплĕ вырăнта кунта. Бригадăпа бригадă, рабочипе рабочи ăмăртаççĕ. Ăмăртура стаханăвĕцсемпе ударниксем, ĕç паттăрĕсем ÿсеççĕ. Натали Филиппăвă çĕр чаваланă çĕрте ĕçлевĕ. Нормăна 150—160 процент тултарса пынă. Ăна нумай пулмаст груз антарса хăпартакан машинă патĕнче ĕçлеме лартнă.

Натали Филиппăвă производствăра кăна мар, обшчĕствăлă ĕçре те активлă хутшăнса ĕçлет. Ăна рабочисем йуратса хисеплеççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ Филиппăвă йулташа Йĕпреç районне кĕрекен Тимĕрçкасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне суйларĕç.

—Суйлавçăсем мана пысăк шанăç панине ĕçпе тÿрре кăларатăп,—тет Филиппăвă йулташ. Вăл хăйĕн суйлавçисене пысăк пулăшу парат. Акă, „III Интернационал" колхоза райсойуз автомашинă памасăр чăрмантарса тăнă. Ку ĕçе Натали Филиппăвнă тĕрĕсленĕ те колхозниксене автомашинă илме пулăшнă. Сланĕц рудникĕнчи клуб заведуйушчийĕ Пушкинă йулташ 4 уйăх ĕç укçи илеймен, Кирейĕв деçатник ним айăпсăрах икĕ стаханăвĕца ĕçрен кăларнă пулнă. Кусене Натали Филиппăвă пурне те ĕçлĕ пулăшу панă. Хăйĕн суйлавçисенчен илнĕ çырусене вăхăтра ответлет. Мĕнле ĕçсем туса ирттернине хăйĕн дневникĕ çине çырса пырат.

Натали Филиппăвнă стаханăвкă, социалисăмлă ăмăртăва пуçарса йаракансенчен пĕри пулса тăрат. Вăл пуçарнипе сланĕц рудникĕнчи рабочисем Октăбĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Акă, сланĕц рудникĕнчи шахтĕрсем А. Сорокин нормăна 232 процент, Счетчикăв 206 процент, Некрозăв 189 процент тултараççĕ. Октăбĕр уйăхĕнче кашни 500—600-шер тенкĕ ĕçукçи илнĕ. Сухановăв йертсе пыракан платниксен бригади ĕç нормине 221 процент тултарат. Октăбĕр уйăхĕшĕн 640 тенкĕшер ĕç укçи илнĕ. Кузнецов йертсе пыракан бетоншчиксен бригади нормăна 278 процент, Слободкин йертсе пыракан каменшчиксен бригади 227 процент тултараççĕ. Вĕсем октăбĕр уйăхĕшĕн 788 тенкĕшер ĕçлесе илнĕ. Çĕр чавнă çĕрте ĕçлекен Изулин рабочи нормăна 316 процент тултарса 470 тенкĕ ĕç укçи илет. Кун пек паха тĕслĕхсем вуншарăн шутланаççĕ.

Социалисăмлă ĕç, ырă та телейлĕ пурнăç çеç çакăн пек ĕç геройĕсемпе героинĕсене ÿстерсе çитĕнтерме пултарат.

В. Вишневский.

Гавас агентстви Англипе Франци хушшинче пулмали калаçусем çинчен пĕлтерни

Англипе Франци хушшинче çитес вăхăтра Парижра пулмали калаçусем пирки Гавас агентстви: министрсен Мÿнхенри килĕшÿ хыççăн пулса тăнă ĕççене пăхса тухмала пулат, тесе пĕлтерет. Вĕсем Румынипе Йугослави позицийĕ çинчен, çавăн пекех тата Ватаçĕр тинĕс ыйтăвĕ çинчен калаçĕç.

Франко генерала вăрçă вăрçакан йĕнĕн правине пама пултарасси йенчен илсен, Гавас пĕлтернĕ тăрăх, Франци ку ыйтура Испани ĕçне хутшăнас мар йĕнĕпе ĕçлекен комитет тунă килĕшÿрен тухма шутламаст. Вăл килĕшÿре малтан йут çĕршыв çарĕсене пурне те Испанирен илсе тухма кирлине каторгнă. Çавăн пекех тата Инçет-Хĕвел-тухăçĕнчи ĕççем çинчен тата Ватам Йевропăри економикăлă ĕççем çинчен сÿтсе-йавмала. Гавас агентстви калană тăрăх, колонисем пирки тăракан ыйтăва сÿтсе-йавмала мар, анчах та министрсем Англипе Францин коммуникацисемпе инçетри çĕрĕсене сыхласа тăмали ыйтăва, çавăн пекех тата çак ыйтусенчен хĕçпăшалланас йенĕпе тухса тăракан ыйтăвсене пăхса тухмала пек курăнат.

Англипе Франци хушшинчи калаçусем

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Парижра Англипе Франци хушшинчи калаçусем пуçланнă. Çак калаçусенче Англипе Францин çар тусăхĕ çинчен, вĕсем Германипе тата Италипе мĕнле çыхăнса тăрасси çинчен сÿтсе-йавасçĕ. Çавăн пекех Испани пирки тăракан ыйтăва та сÿтсе-йавасçĕ.

Çак калаçусене иртерме Англирен Парижа Англи правительстви пуçлăхĕ Чемберлен тата йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Галифакс пынă.

(ТАСС).

Францири чрезвычайлă декретсене хирĕçле йухăм

Францире чрезвычайлă декретсене хирĕçле протест йухăмĕ сарăласа пырат. Çак кунсенче нумай предприйатисенчи рабочисем забастовкăсем пуçланă. Забастовкă хаљ те пĕтмен. Валансйенра (Нор департаменчĕ) чрезвычайлă декретсене хирĕç протестлесе пуçланă забастовкăна 29 пин çын хутшăннă.

Ĕçлевĕн пĕтĕмĕшлĕ конфедерацийĕ (профсойузсен пĕрлешĕвĕ) правительствăн политикине хирĕç протест туса нумай митингсем организацилене. Париж хули хĕррисенче пулнă митингсене „Рено“ савăчĕсенчи рабочисем 15 пин çын пухăннă.

Руанри митинга 25 пин çын пухăнна. Митингра Ĕçлевĕн пĕтĕмĕшлĕ конфедераци секретарĕн заместителĕ Фрашон пĕтĕм çĕршывĕпех стачкăсем тăвасси çинчен, вăл стачкăсене промышленнăçăн пур отрăçлĕсенчи рабочисемпе служащисене те йавăçтармала тăвасси çинчен каланине митинг ырласа саламланă.

Францири профсойузсен пĕрлешĕвĕсем пурте хайсен членĕсене „Нацилĕ протест кунне“ хутшăнма чĕнеççĕ (вăл куна нойабĕрĕн 26-мĕшĕнче иртермеле тунă). Пĕтĕм çĕршыври забастовкăна хатĕрлеме чĕнеççĕ. Вăл забастовкă хăш кун пуçланмалине малашне пĕлтерессĕ.

(ТАСС).

Германин Америкăри шпионла центрĕн процесĕ

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче Нью-Йоркра Германин Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенчи шпионла центрĕн процесĕнче айăпланакансене допрос туса пĕтернĕ.

Октябĕрĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа процесра нумай свидетельсем каторса панисене, айăпланакансем—Германин шпионла центрне тачă çыхăнса тăнă Румрих т. ыт. тисем каласа панисене илсене. Çакна палăртнă: Германипе усă курĕс шутпа Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсене пайла шпионла ĕçсем туса пынă.

(ТАСС).

Румыни короле Германире

ПАРИЖ. „Пти паризйен“ хаçат Берлинран илнĕ телеграммăра: Германипе пынă Румыни королĕ нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Берхтесгаденра Гитлер патне тухса кайнă, тесе пĕлтерĕ.

(ТАСС).

Петĕрнери педучилищĕн физкультура отделенийĕ физкультура йĕнĕпе ĕçлеме çулсеренех квалификацилĕ инструкторсем вунăшар çын вĕрентсе кăларат. ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: студентка Тетерина йултăш упражнени тăват.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Финљандире фашисла организацине ĕçлеме чарса лартнă

Финљанди правительстви лапуасĕсен фашисла организацине ĕçлеме чарса лартнă.

Çак организаци хăй умне коммунисăма хирĕç кĕрешес тĕллев лартнă. Ăна 1929 çулта Лапуа йаталă ьнрăнчи кулаксем пуçласа панă. Çавантан вăлĕ те ĕнтĕ кĕсем хайсен йатне. Çак организацине чăсах Финљандири пур фашисла организацисем те — буржуази, пысăк ырăнсенче ĕçлекен чиновниксем, тĕп ĕçĕнчи çынсем т. ыт. те кĕнĕ.

1930 çултан пуçласа лапуасĕцсем рабочисен организацисене хирĕç уçса кайсах террор сарса йанă. Вĕсем рабочисен хаçачĕсен типографийĕсене çĕмĕрсе пурăнна, фашисăма хирĕç кĕрешекен çынсене вĕлернĕ т. ыт. те.

Германире влаçа гитлĕрăнецсем кĕрсе ларна хыççăн, лапуасĕцсем хайсен погромла ĕçĕсене вăйлатна штурмовой отрйадсем тунă.

Лапуасĕцсем хайсен ишĕатерулĕ шпионла ĕçĕсене йулашки вăхăтра уйрăмах аван сарса панă. Вĕсем çак ĕçсене Германи фашисĕмпе пулăшса шутпа тăваççĕ. Германи фашисĕ финљандири сурĕр Йевропăри йут çĕрсене турса илмели. Совет Сойузĕ çине пăшалсăр туса хурасшăн тăрăшат.

Лапуасĕцсен организацине ĕçлеме чарса лартни вăл вĕсем тогсулаисăна хирĕç пысăк сиенлĕ ĕç тăва пынине катартса парат.

(ТАСС).

Польшă правительствин чрезвычайлă декречĕсем

Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Польшă правительстви чрезвычайлă ниçĕ декрет пичетлесе кăларнă. Вăл декретсем çĕршывра политикăлă пурнăçа, пĕтĕм государствăлă аппарата палла фашисла пынине çатартса параççĕ.

„Государствăна сыхласси çинчен“ калакан декрет „суйа свеДĕнисем“ тата „паникăла пухăнисем“ малсен“ сарнишăн, вăсен вырăсенчи тата центри органĕсен авторитетне, государствă ĕçĕнчи чиновниксен авторитетне çĕмĕрнишĕн, урăх çĕршывсенчи радиостанцисен передачисене итленишĕн т. ыт. çаван пек ĕççемшĕн хайăрăн айăпламала тăват.

Рабочисен забастовкисем пирки пролетарийатлăхан çынсене уйрăмах хайăррăн айăпламала тунă декретра.

(ТАСС).

Гранатометчик-колхозниксем

Граната ывăтасси—колхоз çамрăкĕсен йуратнă оборонăлă-спорта ĕçĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Минск районĕнчи (Бĕлоруссин) нумай колхозсенче „Граната ывăтас“ кружокĕсем тунă. Çак кунсенче Минск районĕнчи граната ывăтма вĕреннĕ колхозниксем амăртăва пулса иртнĕ. Ун пек амăрту районра халичен пулман. 30 çамрăк колхозник гранатăна чупса ывăтса, чĕркулесса ларса тата выртса ывăтас ĕçре хайсем туса ситĕнÿсене катартса панă.

(ТАСС).

Чехословаки президентне суйлас умĕн

ПРАГА, нойабĕрĕн 24-мĕш. „Наци пĕрлĕхĕн парти“ тата „Глинкин национальнăй парти“ представителĕсен канашлăвĕ Чехословаки президентне лартма палартнă доктăр Емиљ Гаха президента суйлама баллотировкăна тăма килĕшÿ панă.

Журналисчем хушшинчи хыпарсем тăрăх, Чехословакин политикă ĕçĕнче йĕртсе ырăкан çынисене суйлавă чухне президента суйлама Гаха кандидатурине палăртса хунă, малтан тĕрлĕ сантаксĕне унăн пачĕ президента суйлама палăртнă кандидатурăсен спискинче пулман та. Çапла ĕнтĕ, республикă пуçлăнни́ранпа 20 çул хушшинче пулнă политикăлă партисемпе шнăшĕнне те çыхăнса тăман çынна президента суйлама палăртса хунă.

(ТАСС).

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен сывлăш-çар флотне вăйлатни

НЬЮ-ЙОРК, нойабĕрĕн 24-мĕш. Йунайтед пресс агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕн помошникĕ Джонсон: президент Рузвельт сывлăш-çар флотне сахалтан та 12 пин самољота çити вăйлатма шухăшлат, тесе пĕлтернĕ. Халљхи вăхăтра Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен çар авиацийĕпе тинĕс авиацийĕ 3.500 самољотран тăрат. Джонсон сăмахĕсем тăрăх, правительствă çĕнĕ çар самољочĕсем тăвас ĕçе валљи 650 мĕлйун доллар пама шутлат. Сывлăш-çар флотне вăйлатас ĕçе кайакан пĕтĕм расхутсем (çĕнĕ аеродромсемпе тĕрлĕ сооруженисем тунине, служăри çынсен шучĕ ÿсиине пĕрле илсе шутласан) 1,5 мĕлйард доллара йахăн пулаççĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

**Сталинградра парти пĕрлĕхĕн сурчĕнче лекторий организацилене. Малтанхи улта лекцие пропагандистсем, агитаторсем, рабочисем тата совет интеллигенцин представителĕсем пурĕ пин çурă çын пынă.

** Осоавиахим Тĕп Совечĕн Президиумĕ П. Николаева, М. Валова, Д. Малыйева, Н. Павлова, С. Самбурова, Г. Федоровскине, Н. Каврова, Р. Виноградова, Ф. Потехина, В. Гулљнике ССР Сойузĕн парашют спорчĕн мастарĕ йатне панă. Вĕсем пурте пекех парашют спорчĕн пĕрремĕш категорири инструкторĕсем. Вĕсем темиçе пин парашутсе вĕрентсе хатĕрленĕ.

** Сыхăх вăхăтсĕне екран çине вĕрчи чи пысăк пăрçăмрен „Иосиф Сталин“ çинчен „Флагман Арктики“ йатлă кинооченĕрк тухат. Кинооченĕрк пăрçăмрен екипажĕн кулленхи ĕçĕпе пурнăçĕ çинчен каласа парат.

** Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче Черемхов бассейнĕнче горнякĕсем хайсен çулталлăк планне срукпачех тултарнă.

** Кара-Ногайск районĕнчи Димитров йачĕпе тăракан колхозниксемпе (вылљх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхоз) колхозниксене ĕçкунĕсене 13 тенкĕ аванс (укçан) панă. Палла чабан Магомет Жуматайĕн 11 пин тенкĕ йахăн илнĕ. Асла чабан Али Абдулаевна пурĕ пин тенкĕ ытла аванс илнĕ. Расчот тунă чух ку палăх чабансем 20—25-шер пин тенкĕ илессĕ.

(ТАСС).

„Седов“ пăрçăмрен куçса çÿрени

„Седов“ пăрçăмрен борчĕ. Нойабĕрĕн 24-мĕш. Пăрçăмрен районĕнче иккĕмĕш кун çилсенчен тамалăн. Кантăр йенчен çил вăрçе тăнине, майла çивĕсем хыççăн çантăлăк йăвăтна. Енер температурă 11,6 градус сивĕ пулнă. Ирхине пăр хускалса куçни палăрна.

Енер 11 сехетре пăрçăмрен çурçĕр широтин 85-мĕш градусĕнче 27-мĕш минут тата хĕвелтухăç долготин 125-мĕш градусĕнче 07-мĕш минучĕ çинче пулнă. Екипаж сывах.

(ТАСС).

Елĕк тайга пулнă вырăнта

Октябĕрĕн революцичен ессеинсем „Сухтан“ тенĕ вырăна пĕтĕ хăратнă. Минтен тесе, ессеинсем хайсене помещиксенчен пуçняххотсен хатăрне тĕлĕгне керекен редноднисреране петна правительствипе тăтăрна. Сенере ссылкăна пана. Сакăна та уй чухне кунта сирĕпна „майна“ çĕрсене тене.

Сирем пĕр çул хушшинче Сенере ссылкăна тенренех улăштарнă. Ене Кузбасна уй сывалрне колхозсене пурнăç мелне çĕнĕрĕ пысăк çынсем çарса катартасшăн. Кузбас вал—шиккемен Донбас. Унта хал çĕр камрăк вакăпнан катушар пысăк шахтасем ĕçлессĕ.

Тĕрĕсне шахтăсенчен пысăк сывăтсем ÿссе ларнă. Варвара, мурайях пасатнсене Прокопĕвск, Сталинск, Киселевск, Белово тата пĕтĕм промышленно хулисем ситĕнеç. Пурте пĕтĕмĕш колхозсенче хушшинче стахановсем... Ене ударниксем пуманн пурнăçлатса. Белово хулинче куниунсе çинче ĕçлекен И. М. Кощеев йулташ. Белово суйлавĕ округĕнче РСФСР Верховнăй Совечне депутата суйларĕç. Вăл палла машинистка-ханăн.

Тыхтари „Суттала“ колхоз тайга вырăнне хĕрнĕле вырнасна. Кунтан Беловска 45 километр. Новосибирска 350 километр. Елĕк ку вырăнта шуран пулна. Совет влаçĕ пулна хыççăн ессерсенчех кунта колхоз пулса çене пурнăç тума тытăнна. 29 çул хушшинче 52 хусалăха çитрĕ. Халĕ кунта пуçламăш шкул тата клуб пур. Шкулта 19 ача вĕренет. Самрăксен кассен клуба пуçласа вăхăта савăнăçлă иртереççĕ. Ситĕннисенчен 80 процент хутла пелессĕ.

Иала тĕрлĕрен хаçат-журналсем 75 екземпляр килсе тăрассĕ. Иалта пĕтĕмпех чăвашсем пурăнасçĕ. Çакна май Чăваш республикăнчи тухакан хаçатсем те нумай килессĕ.

Колхозниксем ырпул тухăçне ÿстересĕ пырас тĕллевпе çине çарса ĕçлессĕ. Кашни сулах ĕскĕре пурне тĕштыра нумай валессĕ. Колхоз йĕтнĕ, султа двигательĕ та вăлхухату чашнесем илнĕ. Кĕсал ырăçсене пĕтĕсе пысăк кушаклă тунă. Халĕ двигательпе ĕçлĕкен пысăк арман тума тытăнна. Колхозниксем пурте вылљх усрăкан пулчĕç.

Кăсал „Суттала“ колхоз Новосибирск облаçĕнчи малта пыракан колхозсен шутне кĕчĕ. Ана облаçри хисеп хăми çинче кĕртрĕç.

С. ПАКАВЛЕВ.

Ревизи ĕçне çÿле вырăна лартмала

Республикăри тĕрлĕ хуçалăхлă организацисен органĕсем хайсен районсенчи организацисен ĕççене тĕрĕслесе тăмаринпе вырăнсĕнче укçа-тенкĕ дисциплинине пăсисем нумай пулассĕ. Маслопром, Заготскот, Чăвашсойуз, Коопинсойуз системисем ревизи ĕçне кирлĕ вырăна лартман.

Елĕк районĕнчи çу савăтне, Заготскота 1936 çултанпа ревизи туман. Çавăн пек контрол пулман пирки вăл организацисенче ĕçри дисциплинăна пăсса пырассĕ.

Елĕкри çу савăчĕн директорĕ пулса ĕçленĕ Кротков йултăш государствă планне хатĕрленĕ çусене Чăвашмаслопром парăн памасăрах хака хăпартса контрацинне хакпа Семерлери çу савăтне сутса йанă. Государствă бюджетне илмели 13805 тенкĕ укçана пытарса усранă.

Вăрманкас промколхосенче учотпа отчот ĕçне арлаштарса пĕтернĕ. Унăн бухгалтерĕ Никитин ĕç укçине хай мĕн чухлĕ илес тенĕ, çавăн чухлĕ илсе пурăннă. 300 тенкĕ вырăнне вăл 370 тенкĕшер илнĕ. Унсăр пусне „за подгон бухгалтерии“ теннипе 300 тенкĕ илнĕ т. ыт. Çак ĕссене Леспромсойуз ревизорĕ Лобышĕв йултăш ревизи тунă вăхăтра шырламасăр, бухгалтерпе пĕр ерне ĕççе пурăннипе ревизи туса кайна.

Семерккассинчи промертел председателĕ Шумилĕв йултăш Ленинград т. ыт. те хуласене кайса таварсем илсе килсе спекуляци тунă. Анчах та промсойуз ревизорĕсем ку ĕçпе интересленмен.

Ман-Тукташри инвалидсен ертелĕн председателĕ пулнăскер Шувалĕв йултăш расхулачи тунă, шанчăксăр çынсене ĕçе илсе. Мускава кайса тĕрлĕ таварсем илсе килсе спекуляци туса пурăннă. Кунтă Коопинсойуз ревизорĕсем—Степанăв, Сапачкин йултăшсем пулнă пулсан та, кусемпе интересленмен.

Маслопром, Заготскот, Чăвашсойуз, Коопинсойуз организацисен хайсен вырăнтасисене ревизи комиссисене çĕрĕленĕ, вырăн хайсен организацисене йетре тĕрĕслесе укса-тенкĕ дисциплинине йеченĕ пăсакансене вирлĕн кĕрешмелле.

Д. КАРИКАВ.

Вкладчиксен йышĕ ÿсет

ЙĔТĔРНЕ. Районра перекет кассисе уйрăмĕсем тăватă. Кăçалхи йанварĕн 1-мĕшне çак перекет кассен уйрăмĕсенче 411501 тенкĕ укçа пулнă. Вкладчиксен йышĕ ÿссе пырат. Çакна пула перекет касси уйрăмĕсенче вкладчиксем хунă укçа 617533 тенкĕ çитнĕ. Вкладчиксем йышĕ ÿсине кура районри перекет касси Турн-Ачак йалĕнче апрел уйăхĕнче çĕнĕрен перекет касси уçнă. Унта вкладчиксем йышĕ 57 çын.

Вкладчиксен йышне ÿстересси ĕçне Патрино тата Балдай уйрăмĕсем лайăх ĕçлесе пынă. Йанварĕн 1-мĕшне Йатрнори перекет касси уйрăмĕнче вкладчиксен хунă укçа 8472 тенкĕ пулна пулсан, халĕ 20 пине çитнĕ. Балдай уйрăмĕнче 20 пинрен 42 пине çитнĕ.

Районĕре кăçал займ подписчикĕсене 50,600 тенкĕ ытлăн укçи тÿленĕ.

Ник. Цветков.

Осоавиахим ĕçне вăйлатни кирлĕ

ПАТĂРЬЕЛ. Нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче Осоавиахимăн районри советăн пленумĕ пулса иртрĕ. Райсовет пленума начар хатĕрленнĕ. Пленум пухăнне 10 сехетре уçмалли вырăнне кăнтăрла иртсен 2 сехет иртсессĕн тин пуçланчĕ. Пленума пымалли 40 çынран пурĕ те 20 çын çеç пухăнчĕ. Пленум райсовет ĕçĕсем çинчен отчот тата организацилĕ ыйтусем сÿтсе-йавре.

Райсовет ĕçĕсем çинчен унăн председателĕ Петров йултăш отчот туса пачĕ. Вăл отчота тума хатĕрленмен, аран-аран отчот тукаларĕ. Прениçе тăхăр çын тухса каларĕç. Вĕсем райсовет начар ĕçленине палăртса хыттăн критиклерĕç.

Пленум Осоавиахимăн районри советне ĕçне ситĕлĕклĕ, тесе йышăнчĕ, ĕçсене вăйлатас тĕлĕшпе решени йышăнчĕ.

Ник. Квасков.

Авиаспециалиссем

Çак кунсенче Мускав Çар Округĕнчи №-лĕ чăсри №-шкултан çамрăк авиаспециалис-командирсем вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнисенчен 76 процент комсомолецсем. Вĕсен хушшинче чăвашсем те чылай. Акă, Йегорăв йултăш чăваш, комсомолец. Вăл пур предметсемпе те отличнă вĕреннĕ. Лайăх вĕреннĕшĕн шкул командованийĕ ăна 7 хутчен тав тунă, бригадăри мухтав хăми çине кăларнă. Çакăн пекех чăваш краснофлотецĕнчен Алексейĕв т. ыт. йултăшсем те отличнă вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнисем тăван çĕршыва сыхлас ĕçре отличнă ĕçлесе пыма пулчĕç.

Авиаспециалист-командир — З. Андрейĕв.

„Темп“ обшчĕствин шахмăт турнирĕ

Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче Шупашкарта „Темп“ обшчĕствин шахмăт турнирĕ пуçланчĕ. Турнирта 12 çын выљаççĕ. Виççĕ тур хыççăн Никитин малта пырат. Унăн 3 очко. Ун хыççăн Г. Иванов—2 очко, Кординан—2 очко.

Иванов.

Йанăмри драмкружок

Йанăмри (Тугаркас р.) Михайлăв, учител йĕртсе пыракан шăвлă оркестрпа драмкружок нумай пулмаст колхозниксене пысăк концерт лартса пачĕ. Шăвлă оркестр çĕнĕ йурăсене пысăк маçтăрлăхпа выљарĕ. Драмкружок „Тăван çĕршывшăн“ пйесă лартса пачĕ. Шăвлă оркестр Сталинла Конституци кувĕ тĕлне çĕнĕ йурăсем вĕренсе хатĕрленет.

Çак кунсенче шăвлă оркестр Йĕтĕрне хулине концерт пама кайат.

Н. Амурцĕв.

Ача-пăчасем валљи саслă кинокартинăсем

„Сойузкинопрокатăн“ Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ ача-пăчасем валљи йатарласа саслă кинокартинăсем кăларма тытăннă. Унта 40 ытла тĕрлĕрен мултипликацилĕ картинăсем: „Воздушные приключения“, „Рассеянный человек“, „Мальчик с пальчик“, „Кот в сапогах“, „Красная шапочка“, тата ыттисем те пулаççĕ.

126 стахановец екскурсисене кайнă

Чăваштревпромсойуз системинче кĕрекен промысла ертелĕсенчи стахановецсенчен кăçал май—нойабĕр уйăхĕсем хушшинче 126 çын тĕрлĕ çĕре екскурсие кайса курнă. Вăл шутран Ленинграда Хусан хулисене 30-шар çын, Мускавра—23 çын, Горькинче—19, Днепр шывĕпе Хура тинĕс çинче—8, Крымра—10, Сталин йачĕпе тăракан Беломор канал çинче 4 çын т. ыт. пулнă.

Н. Йашков.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Çĕнĕ савăт строительствин управленине
ЙАЛАНЛĂХАХ
ТРАНСПАРТ ĔÇНЕ ТУМА КИРЛĔ
1. Организацисемпе предприйатисен тата колхозсен автомашинисем.
2. Колхозсемпе йединоличниксен лашисем.
Шоферсене тата лашăç рабочисене обчежития параççĕ, автомашинăсене тăратма гараж пур.
Йĕнĕçе вăхăтра строительствă горючи тата запас материалсем пайĕн фондĕнчен парат.
Адресĕ: ЧАССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çаралĕсем... Шупашкар хули, Чернышевски урамĕ, 5.
Кадрсен пайĕ.
3—3

„Чăваш Коммунĕ“ издательствине ЙАЛАНЛĂХАХ ĔÇЛЕМЕ
АСЛĂ БУХГАЛТĔР
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ
Ĕçумĕ килĕшÿ тăрăх.
Хватер параççĕ.

ЧĂВАШСТРОЙТРЕСТĂН СНАБЖЕНИ ПАЙĔ
краскăсем, тимĕр, тимĕртаварсем, фарфартан тунă шултра роликсем, хулăм тата пĕчĕк виçелĕ кантăк, тарă
СУТАТ
Адресĕ: Ленинградская, 28.
Кашни кунех кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа ыйтса пĕлме пулат.
5—1

ШУПАШКАРТИ ÇАКĂР ПĔÇЕРЕКЕН САВĂТ МИЉУТИНСКИ СКЛАДРАН
2,000 КУБОМЕТР ВУТĂ
ТУРТТАРСА КИЛМЕ ТЫТĂТ
Çакăр пĕçерекен савăт кантурĕнче ыйтса пĕлмелле.
Директăр.

АВТОХУÇАЛĂХСЕНЕ
ПĔЛСЕ ТĂМА
Горючипе сĕрмелли материалсем илмелли талонсемпе тата нарйадсемпе (йанварĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа октябĕре çитиччен штамп пуçсӑçсемпе) усă курса пĕтермен пулсан, вĕсем тăрăх расчот тума çав талонсемпе нарйадсене 1938 çулти декабĕрĕн 1-мĕшнеччен Россвабсбыт Чăваш уйрăмĕн Транспарт кантурне тăратмала, çак срук хыççăн ÿлĕсси çинчен претензисем йышăнмаççĕ.
Чăвашросснабсбыт.
3—1

Уполномоченный Чувашглавлита № 572. Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № 832 ф. 6. 54×84 п. л.